Николай УГАРИН

# САВНĂ КИН

(мыскара)

Мыскарари çынсем:
ТЯТТЮК
ПĂНЧЧУК – унăн упăшки
ШУРИК – вĕсен ывăлĕ
МАЮК – кӳршĕ Хĕрарăмĕ
ФЕНЯ – Маюк хĕрĕ
НЮРА – лавккаçă хĕрĕ
ВОВА – хула каччи

## I пайĕ.

1 картина*. Хальхи чăваш ялĕ. Пĕр енче Тяттюксен пӳрчĕ вырнаçнă, тепĕр енче – Маюксен. Çуллахи кун.*

*Пăнччук па Маюк такмак каласа килеççĕ.*

МАЮК. Кай, такмакçă, çитĕ сана такмакласа, сан такмакусен вĕçĕ хĕрри те пулас çук. Çамрăк чухне чĕрĕрех пулмаллаччĕ, юратнă пулсан, ярса илмеллеччĕ те илсе каçмаллаччĕ хăвăр пата, расна та пурăнман пулăттămăр. Ху хăюсăр пулнипе мана пуçтах каччă măшкăлĕ туса хутăн.
ПĂНЧЧУК *(маскине хывса).* Сан систермеллеччĕ. Эп сана юратсах унпа каян пуль терĕм.
МАЮК. Юратса, асту. Юратнă пулсан ик уйăхранах уйрăлса килмен пулăттăм ĕнтĕ. Эс вара унччен авланса та янă.
ПĂНЧЧУК. Эп юри сан çине тарăхнипе. Çавăнтанпа паян кунччченех тарăхса пурăнатăп çав Тяттюкпа.
МАЮК. Турри çырнă пуль ĕнтĕ çавăн пек пулма, халь тин мĕн тăвайăн.
ПĂНЧЧУК. Хамăр пĕрле пулаймарăмăр, хăть ачасене пĕрле тăвасчĕ.
МАЮК. Пиртен кăна килсессĕн. Хăйсем пĕр-пĕрин патне майне-шывне тупчĕрччĕ.
ПĂНЧЧУК. Çулне-йĕрне хамăр кăтартсан, майне-шывне тупĕç-ха. Эпĕ вĕсене пĕрле тума тахçанах план туса хунă. Пĕтĕмпех эп шутланă пек пулсан, Шурик килсенех туй тăватпăр, ак.
МАЮК. Тутарать сана Тяттюк, вăл темле плана та пăсать. Эп санпа клубра концертсенче юрласа çӳренине пĕлнĕренпех, ман çине куç хĕррипе пăхса çӳрет. Михетер арăмĕнчен пĕрре те кая мар вăл сан.
ПĂНЧЧУК. Ывăлпа иксĕмĕр эпир пĕр каварлă. Халлĕхе пĕтĕмпех эпир унпа калаçса татăлнă пек пырать. Ак Шурик килет те, вара каять пирĕн пурнăç пыл та çу.
МАЮК.Сан ывăлу вĕреннĕ çĕрте такама та тупса янă пулсан? Çавăтса килĕ те акă пĕрне...

**ПĂНЧЧУК.** Пирĕн Шурик çынпа сăмах хушса калаçм пит ăста ача мар çав, çавăнпа та кулянма та кирлĕ мар.
**МАЮК.** Ман хĕр вĕт ах тур юратмаллискер те, чăрмавсем сиксе ан тухчĕр тетĕп мар-и?

*Вова килет, пит яка тумланнă.*

**ВОВА.** О, здорово, хамăр ял! Утатпăр-и, чупатпăр-и, пĕрне-пĕри саватпăр-и?
**МАЮК.** Савма хĕрпе каччă мар эпир.
**ПĂНЧЧУК.** Эпир репетиции тăватпăр-ха, концертра юрлама хатĕрленетпĕр.
**МАЮК.** Кам пултăн-ха эс, ачам?
**ПĂНЧЧУК.** Палламарăн-и ара? Хăрахкассинчи çĕтĕк-çурăк пухса çӳрекен чалăш Палля ывăлĕ-иç.
**МАЮК.** И-и-и, вара çав, вара çав. Ашшĕпе кашни пасара çĕтĕк пухма тухатчĕ, чугун тавраш туянатчĕ, тирпе услам тăватчĕ. Ялта ăна çĕтĕк-çурăк патши тесех чĕнетчĕç. Тульккă тирсен хакĕсене шутсăр чакаратчĕ. Хăçан паран, ялан виççĕмĕш сорт кăна тетчĕ.
**ВОВА.** Пĕрремĕш сортлă пултăр тесен тирне пĕлсе сӳмелле.
**МАЮК.** Ман пеккисене юри улталанă ĕнтĕ вăл, услам тунă хăй валли. Атту çĕтĕк-çурăк пухсах ăçтан патша пек пурăнан?
**ВОВА.** Çĕтĕк-çурăк патши те вăл патшах, тетя Маша.
**МАЮК.** Ай-уй, мана  майралла ан чĕн-ха эсĕ, Вова, ялтилле Маюк аппа те.
**ВОВА.** Ялтилле калаçса хамăн деловой чĕлхене пăсас килмест.
**ПĂНЧЧУК.** Мĕн делисем делат тăван-ха вара эс, унта та çĕтĕкпе услам тăватна?
**ВОВА.** Пысăк деласем, дядя Понтелей. Пысăк деласем  çавăрса ярсан çеç патша шутĕнче пулма пулать халь. Анчах та эпĕ унта çĕтĕк çурăк патши мар, урăхла патша. Манăн халĕ хамăн целый империи.
**ПĂНЧЧУК.** Империалистах тухса кайрăн пулать-и-ха вара? Ют çĕршыврах пурăнатăн пуль таперччă.
**ВОВА.** Манăн сеть пĕтĕм çĕр чăмăрне çавăрса илнĕ, эпĕ çитмен пĕр шăтăк та юлман тесессĕн те йăнăш пулмасть.
**ПĂНЧЧУК.** Эрешмен карти пек-и?
**ВОВА.** Эрешмен картинчен те анлăрах.
**МАЮК.** Мĕн ĕçлесе чапа тухрăн-ха вара эс, Вова?
**ВОВА.** Ĕç манăн хăнăхиччен кăна йывăрччĕ, халь хăнăхрăм та куç хупсах ĕçлеме пултарап. Ак пĕр тĕслĕх. Çынна малтан çапап, ну, ӳкереп ĕнтĕ урăхла каласан. Кайран пуçне касса илеп.
**МАЮК.** Мĕнле, чĕрĕ çыннах-и?
**ВОВА.** Вилнĕ çынна мар ĕнтĕ.  Чи çамрăк та чи хитре çынсене суйласа илетĕп эпĕ. Хитрисемпе çеç пысăк укçа тума пулать.
**МАЮК***(вăрттăн).* Пăнччук, пĕтрĕмĕр пулас.
**ВОВА.** Кайран çав çын пуçне пĕр-пĕр çĕре кайса çипăçтарап. Унтан вара...

**ПĂНЧЧУК**. Çыннисене шел те мар-и?
**ВОВА.** Мĕн шеллесе тăмалли? Ашшĕпе-амăшĕ шеллеччĕр, маншăн пулсан бизнес туса пултăр. Халь кашни çын хăйшĕн пурăнать. Хăйĕн пурнăçне мĕнле çавăрттарма пултарать, çавăн пек çавăрттарать. Сире ак кам та пулин шеллет-и? Пуçлăхсем шеллеç-и, кÿршĕ-аршă шеллет-и, патшалăх шеллет-и? Хăвăрăн ĕç вырăнĕ те çук пуль-ха, ватăлсан пенçийĕрсем те çĕтĕк-çурăк хакĕ чухлĕ кăна пулаççĕ.
**МАЮК.** Мĕн ĕçĕ пултăр ĕнтĕ ялта? Улма акатпăр та сысна çăвăрлаттаратпăр.
**ВОВА.** Хăвăра хăвăр юратмастăр эсир, негр пек ĕçлеме кăна пĕлетĕр. Халь çăмăллăнах укçа тума пулать, криминал çеç ан пултăр.
**ПĂНЧЧУК.** Пуçа кассан мĕнле криминал ан пултăр-ха?
**ВОВА.** Вĕсене эпĕ ирĕксĕрлемеп, вĕсем ман пата хăйсемех килеççĕ. Паллах урамра çав тери чиперрине курсан ӳкĕтлеме те тивет, укçа та пама тивет. Анчах та кайран çав чиперкке мана хăй сисмесĕрех мĕн чухлĕ укçа туса парать. Хăшĕсен сăнĕ хитрех мар, анчах кĕлетки... Вара ун пек чухне пуçне илмеп, карçинккана ывăтатăп, кĕлеткине хам валли хăваратăп. Е пĕр-пĕр интереслĕ пайне касса илетĕп. Интереслĕ мар пайĕсене пурне те карçинккана. Карçинка тулса çитсен, унтан та вăркăнтарап, йĕрĕ те ан юлтăр.
**МАЮК**. Пăнччук, атя часрах, хамăр пуçа та касĕ ку.
**ПĂНЧЧУК.** Милицисем те пырса тĕрĕслемеççĕ-и вара сана?
**ВОВА**. Мĕн, тĕрĕслекенсем укçа юратмаççĕ тетĕр-им? Укçа паратăп та, кайран ман пата никам та çулăхаймасть. Хăть те мĕн тăвам, хама ирĕк.
**МАЮК.** Пĕтрĕ пуç, участковăйа кайса пĕлтермелле кун пирки, Пăнччук.
**ВОВА**. Пĕр килнĕ япала ялта та бизнес туса каясшăн-ха эп. Дядя Понтелей, эс сыпма юрататăн пулмалла, сан сăн-питӳпе бизнес тума йывăр, а вăт тетя Машапа бизнес туса илме пулать. Ну мĕн, хытланса пăхар-и?
**ПĂНЧЧУК.** Э, çук, Маюка ни за что та памастăп. Хамăн пуçа кастарам та, Маюка тĕкĕнтерместĕп.
**ВОВА.** Эп сире хамăр ял тесе укçа паратăп.
**МАЮК.** Пуçа кассан мĕн тума кирлĕ мана сан укçу? Пăнччук, хăтар мана унран.
**ПĂНЧЧУК.** Кай-кай кунтан усалпа тăванланнăскер.
**ВОВА.** Мĕн пулчĕ вĕсене, çынçиенрен хăранă пек тараççĕ. Эх, мĕскĕнсем, укçаран кам тарать?

*Шурик килет.*

**ВОВА**. О, артист. Ну, здорово что ли?
**ШУРИК.** Салам.
**ВОВА.** Юрлама вĕренетĕп тетĕн-ха апла?
**ШУРИК.** Юрлама пултăр, вара мĕн?

**ВОВА.** Юрласа пар-ха çавăн пек, чун лăплантăр. Е çук, пачах яр уçăлтăр. Хальччен хамăн чĕрене илнисене пурне те кăларса ывăтса, пĕрне кăна хăварам эп унта. Пĕрне кăна, ĕмĕрлĕхе.
**ШУРИК.** Сывлăш нӳрĕ, сасă ларасран хăратăп. *(Кĕрсе каясшăн.)*
**ВОВА**. Тăхта, эп пĕлетĕп эсĕ ма юрласшăн марине? Тулькка асту, Нюрапа юнашар тăнине кăна курам, пуçна касатăп.
**ШУРИК**. Мĕн, мерседес илтĕм те, халь пĕтĕм хĕр манăн пулать тесшĕн-и? Пит кирлĕ мана сан Нюру.*(Кĕрсе каять.)*
**ВОВА.** Сана кирлĕ мар пуль те, мана вара... Эх, юрату, юрату. Ытла та вăйлă вĕт-ха эс, ытла ачаш, ытла та шелсĕр. Эс пур чухне кăна çунатсăрах вĕçетĕн, эс çук чухне вара пурăнас та килмест. *(Кăкăрне шаккаса.)* Вăрçă пырать ак çакăнта, хăрушă вăрçă. Пĕтĕм ăш-чик аманнă манăн халь, пĕр сывă вырăн çук. Мĕн анлăш çак тĕнче, анчах унта мана валли пĕр лăпкă вырăн та юлман. Вăйпа хăват та пулăшаймĕç халь мана, туссем те вăйсăр пулăшма, укçа та. Ытти хĕрсем хупларĕç куçăма. Чи пысăк та чи таса юрату хамăн çумрах пулнă иккен. Çумра чухне хаклама пĕлмерĕм эп ăна, пăрахса кайсан тин... Ăçта-ши эсĕ халь? Санпа пĕрле пулас тесе пĕтĕм мула кăларса панă пулăттăм. Мĕн мана мул? Хам чĕрене, чуна паратăп, хам пурнăçа та шеллеместĕп. *(Нюрана ӳкернĕ плакатсене пур çĕре те çапса тухать.)* Никам та кирлĕ мар мана сансăр пуçне, нимĕн те кирлĕ мар. Пĕр эсĕ çеç, тата хамăрăн пысăк юрату. Пăхăр, курăр, пурте пĕлĕр, эп юрататăп Нюрана, эп унсăраăн пурăнаймастăп. *(Каять.)*
**ФЕНЯ** *(килет, плакатсене курса).* Ку тата мĕне пĕлтерет? Ăçта пăхатăн – унта Нюра сăнĕ. Кам çапса тухнă вара вĕсене? *(Тяттюксен хапхи çинее пăхса.)* Шурик-и, вăл хуларан Нюркана илсе килнĕ-и? Хăйсен хапхи çинее те , хӳми çине те çапса тухнă. Юратап тенĕ-ха тата. Эппин пĕрлешмеллипех илсе килнĕ ăна. Атту пулсан кам пурте курмалла ун мĕлкине çапса тухать? Эх, Шурик, Шурик, эп сана шантăм, эс вара... Пирĕн хапха çине те мăшкăлласа çапса хунă вĕт-ха вăл хăйĕн пулас арăмне. Сăмахпа калама хăяймăп терĕн-и? *(Хапхи çинчи плакатне çурса антарать.)* Плакат çинее пăхса ăнлантăр терĕн-и? Çакăн пек манран кулма шут тытрăн-и? *(Юрлать.)*
Ăçта юрату - унта килĕшӳ,
Ăçта çухату – унта ырату.
Суран ыратни нимĕнех те мар,
Чунăм ыратни чăтмалла та мар.
Телейĕм, телей, эс ăçта çӳрен,
Савнийĕм, савни, кама эс кĕтен?

Телейĕм санпа виçесĕр терĕм,
Асап аякра тăтăр-ха терĕм.
Ултав, ах, ултав, мĕншĕн хур турăн?
Манăн телее мĕншĕн эс татрăн?
Куккукăм, куккук, тек ан авăтсам,
Манăн кунсене тек ан шутласам.

Çамрăк пуçăмпа чунтанах савса
Юратрăм сана, эсĕ – выляса.
Суккăр юрату – ачаш киленӳ
Вăхăчĕ çитсен – шелсĕр тавăру.
Выляса-кулса ĕмĕр иртес çук,
Суя пурнăçпа телей тупас çук.

Тӳснĕ асапĕ – шанăç татăкĕ,
Юхнă куççулĕ – чунăм ылханĕ.
Амане кайăк çунат сараймĕ,
Ăшă еннелле вĕçсе каяймĕ.
Ĕмĕтĕм-ĕмĕт, ĕмĕт çеç пулса
Юлтăн-ши вара чуна амантса?

*Пăнччукапа Маюк тухаççĕ. Аллисене пуртăпа* сейник тытнă.

**МАЮК.** Феня! Феня, теп, кил кунта часрах.
**ФЕНЯ.** Мĕн пулнă вара? Пуртăсемпе ăçта каятăр?
**ПĂНЧЧУК.** Çынçиенрен сыхланатпăр.
**МАЮК.** Ялта çынçиен çӳрет, кĕр пӳрте. Хамăр та аран тарса хăтăлтăмăр.
**ПĂНЧЧУК.** Аннӳне куç хыврĕ те, çипçăнать те çипçăнать ун çумне.
**МАЮК**. Кĕр атя киле часрах.
**ФЕНЯ.** Ман хаçатсем валеçсе пĕтермелле.
**МАЮК.** Мура кайччĕр хаçатусем. Мĕн, пуççăр юлас тетĕн-им?
**ФЕНЯ.** Мĕне кирлĕ мана халь тин пуç, анне? Манăн халь пурăнас та килмест.
**МАЮК**. Ак тата, эс хĕрĕм, тем ан калаç-ха, мана çаплах ан хăрат-ха.
**ПĂНЧЧУК**. Сан пек чипер хĕрĕн мĕн хуйхи пултăр тата? Эп кунта сана Шурик килсенех кин тăвасчĕ тесе ĕмĕтленсе пурăнатăп.
**ФЕНЯ.** Шурикĕр кинĕре илсе килнĕ ĕнтĕ. Ав мĕлкисене те пур çĕре те çапса тухнă, юрататăп сана тенĕ.
**ПĂНЧЧУК.** Мĕнле кин? Мĕнле мĕлке? Кирук арăмĕн хĕрне юратать-и? Вăт мур ачи, пăх-ха ăна мĕн хăтланать. Эп ăна-и?.. Эп ăна çиччас юраттарап такамсене... *(Килне кĕрсе каять.)*
**МАЮК.** Чăнах та-çке, чăнах та. Капла мĕскер пулса тухать-ха, хĕрĕм? Вара унччен Шурик килсен иксĕр çурçĕр иртиччен ак çакăнта лартăр та, эп сире юратса тĕл пулатăр тесеччĕ вĕт-ха.
**ФЕНЯ.** Вăл манпа ун чухне те юлташла кăна калаçрĕ çав.
**МАЮК.** Вара каччăсем вĕсем пурте малтан юлташла, кайран йĕкĕтле, унтан çăвăр автанла калаçаççĕ.
**ФЕНЯ.** Çăвăр автанла Нюркапа калаçнă ĕнтĕ вăл.
**МАЮК.** Ак тамашша, вара капла пирĕн юлашки шанчăк татăлать вĕт-ха.
**ПĂНЧЧУК** *(Шурике хăлхинчен пĕтĕрсе тухать*). Ну-ка тух! Ак çакăнта пăх-ха, мĕн ку? Ак çакă тата мĕн, куратăн-и?
**ШУРИК.** Куратăп.

**ПĂНЧЧУК.** Куратăн пулсан мĕншĕн çакăнса тăраççĕ вĕсем кунта?
**ШУРИК.** Пĕлместĕп эп.
**ФЕНЯ.** Пĕлместĕп тет-ха тата. Эх, Шурик, эп сана урăхла каччă пуль тенĕччĕ, эс вара...
**ПĂНЧЧУК.** Ма пирĕнпе калаçмасăрах ертсе килтĕн ăна? Эпир сана Феняпа пĕрлештерес тесе тăратпăр, вăл вара Кирук арăмĕн хĕрне илсе килнĕ.
**ШУРИК.** Эп никама та илсе килмен.
**ПĂНЧЧУК.** Эппин мĕн тума пирĕн хапха çинче çакăнса тăрать çак мелке пуç? Мĕншĕн ун çине юрататăп тесе çырса хунă?
**ШУРИК.** Феня, эп чăнласах та ăна çакса хуман. Эп нихăçан та юратман ăна. Юратма мар, эп ăна кураймастăп! Ăнлан-ха эс мана. *(Плакантне çурса тăкать.)*
**МАЮК.** Мĕн ăнланмалли кунта, каламасăрах веçех паллă.
**ПĂНЧЧУК.** Кил-ха кунта ухмах пуç, халех пуçна пуртăпа касса тататăп. Пурпĕр хывăх çеç санăн унта.
**ШУРИК.** Атте, чарăн-ха эс, эп чăн та нимĕн те пĕлместĕп. *(Пăнччук Шурике хăвалать, кĕрсе каяççĕ.)*
**ФЕНЯ.** Эх, анне, телейсĕр хĕр эпĕ.
**МАЮК.** Хамăн та телей пулмарĕ çав. Аякран иртсе каять пулас вăл пиртен. Эй, яй-яй. *(Кĕрсе каять.)*
**НЮРА** *(килет).* Здравствуйте! *(Феня чĕнмест.)* Феня, эс мĕн мана палламарăн-и?
**ФЕНЯ.** Палласан мĕн, палламасан мĕн. Халь тин пурпĕр мар-и?
**НЮРА.** Мĕн те пулин пулнă-и вара?
**ФЕНЯ.** Пĕлмĕше персе тăрать-ха тата.
**НЮРА.** Пĕлетĕп, Шурикшĕн çиленетĕн ĕнтĕ. Эп унпа вĕренме кайнăранпах эс манпа калаçмастăн. Юнашар пуласчĕ тесе унпа пĕр училищăна кайман эпĕ, артистка пулас килетчĕ. Анчах вĕренмесĕрех çăмăл укçа тума пулнине туйса илтĕм те, ик уйăхранах пăрахса кайрăм. Леш клоун... Каçар, Шурик тесшĕнччĕ, вăл юлчĕ. Халь те вĕренет-и-ха вăл?
**ФЕНЯ.** Ман ăçтан пĕлес, эс лайăхрах пĕлетĕн пуль.
**НЮРА.** Ах, мĕнле кĕвĕçетĕн вĕт-ха эс. Ун çинчен сăмах хускатнипех кĕвĕçетĕн, эппин юрататăн, çапла-и?
**ФЕНЯ.** Пит кирлĕ пуль кĕвĕçме, эп ун çинчен шутламан та.
**НЮРА.** Куçусем урăхла калаççĕ. Шурик пеккисенчен паллах шанчăклă упăшка пулать. Анчах çамрăк чухне яка чĕлхеллисене юратапăр çав эпир, хитрисене, машиналлисене, пуяннисене. Ун пеккисем вара пĕр арăмпа çеç нихăçан та çырлахмаççĕ.
**ФЕНЯ.** Сан мĕн хуйхăрмалли. Сан халĕ шанчăклă упăшка пулать.
**НЮРА.** Мĕнле упăшка? Кам?
**ФЕНЯ.** Кам пултăр, Шурик. Мана юратап тесе çакса тултарман вĕт пĕтĕм урам, сана юратап тесе. Туй тумалли çеç юлчĕ пулĕ ĕнтĕ халь. Саламлатăп иксĕре те. *(Нăшăклатать.)*
**НЮРА** *(юпа çинчи плаката илсе ахăлтатаса кулать).* Ну, маттур, ну, пултарать. Çакăн пек те пулин мана хăй енне çавăрап терĕ пуль.

Ӗратать иккен, пӗтӗм яла пӗлтерет хӑй кама юратнине. Юратакан ҫынна хут тӑрӑх  юратмаҫҫӗ, чӑнласа юратаҫҫӗ. Ман хыҫран нумай упаленмеллле пулать-ха санӑн, Вовчик.
**ФЕНЯ**. Кам? Вовчик? Вара вӗсене Шурик ҫакса тухман-и?
**НЮРА.** Кун пек япала тума Вовчик кӑна пултарать. Хӑҫантанпа ӗнтӗ ман хыҫран чупать. Вӑл мана хӑй те килӗшет, ӑсталӑхӗпе ӑна ҫитекен те ҫук, анчах....
**ФЕНЯ.** Урӑххине тупса янӑ-и?
**НЮРА.** Тупса янӑ... Вӗсем ун патне кӗтӗвӗ-кӗтӗвӗпе килеҫҫӗ.
**ФЕНЯ.** Мӗн ӗҫлесе пурӑнать вара вӑл?
**НЮРА.** Чӑкарирен те чиперкке тӑвать. Фотомонтаж тӑвать. Ак, сӑмахран, сан сӑнна цифровой фотоаппаратпа ӳкерсе илет те, копьютера вырнаҫтарать, кайран пуҫна компьютерти ятарлӑ инструментсемпе касса илсе тепӗр ҫӗре ҫипӑҫтарать, чаплӑ кӗпесем тӑхӑнтарать, прическине те компьюторпа туса ярать, бриллиантсем те ҫакса ярать. Кирлӗ пулсан патша майринчен пӗрре те кая мар туса парать. Ҫаппа-ҫарамаслантарма та пултарать.
**ФЕНЯ.**  Салтӑнмасӑрах-и?
**НЮРА.** Компьютерпа халӗ мӗн кӑна тумаҫҫӗ, Феня. Ялта вӑл ним те туйӑнмасть, хулара вара... Вӑт Вова хӑш-пӗр программӑсене вӗренсе ҫитнӗ те, студи уҫнӑ. Халь хӗрӗсем, каччисем, ватти-вӗтти -  пурте ун студине чупаҫҫӗ.  Пурте чаплӑ журналсен хуплашки ҫине лекесшӗн. Пурте крутой сайтсене лекесшӗн. Кам авланасшӑн, кам качча каясшӑн. Кам историе кӗрсе юласшӑн. Ун темиҫе сайт: арӑм е упӑшка шыракансен сайчӗ те, хитре хӗрсемпе каччӑсен фоткисемпе услам тӑвакан сайт та. Юлашки вӑхӑтра намӑс сайчӗсемпе те аппаланма тытӑннӑ-ха вӑл.
**ФЕНЯ.** Ан тӗлӗнтер!
**НЮРА**. Тӗлӗнтерет ҫав. Ҫавӑнпа вӑрҫӑнтӑмӑр та эпир унпа.
**ФЕНЯ**. Пурнӑҫра пиччӗн енпе тӳнтер ене пӑтраштранӑ ҫын апла вӑл.
**НЮРА.** Ун пек ҫынран ӑҫтан лайӑх упӑшка пултӑр? Комьютер умне кӗрсе ларать те, пӑрӑна пӗлмест: апат та кирлӗ мар, ҫумри хӗрӗ те кирлӗ мар. Юлашки вӑхӑтра тата ҫынсемсӗрех намӑс киносем ӳкерме пуҫланӑ.
**ФЕНЯ.** Ҫынсемсӗр те кино ӳкерме пулать-и?
**НЮРА.** Пулать тет ҫав. Компьютерпа халь ху салтӑнмасӑр та сана ҫаппа-ҫарамас туса кӑтартма пултарать вӑл. Пур енчен те ӳкерсе илсе виҫӗ шайлӑ ӳкерчӗк тӑвать те, экран ҫинче утакан та тӑвать, выртакан та, тем тӑвакан та туса кӑтартма пултарать. Сана виртуаллӑ артиста  ҫавӑрать.  Ҫавӑн пек темиҫе пукане тӑвать  те, ҫынсӑрах киносем ӳкерет. Ак сан сӑнна ҫав пукане ҫине ҫипӑҫтарать те, кайран эп унта кайман, эп унпа пулман тесе те калаймастӑн.
**ФЕНЯ.** Ай, турах, ун пек тӑвас пулсан эп ӑна.... Ӑс кӗртсе илмелле ӑна. Пӑх-ха мӗнле иртӗхсе кайнӑ.
**НЮРА.** Сан вара Шурикпе мӗнле? Тӗл пулкалатӑр-и?
**ФЕНЯ.** Тахҫан пӗрре.

НЮРА. Халĕ те йĕкĕт шутне кĕреймест пуль-ха, халь те малтанах вĕренсе хунă сăмахсемпе калаçать пуль. Çапла-и?
ФЕНЯ. Çапларах çав.
НЮРА. Эппин ăна та ăс кĕртсе илмелле.
ФЕНЯ. Эсĕ вара пурпĕр çав Вовчика юрататăн-и?
НЮРА. Юрататăп та, кураймастăп та пĕр харăс. Мĕншĕн тесен вăл хăйĕн сайчĕсене манран та ытларах юратать. Çавăнпа пăрахса килтĕм те. Ăнлантăр терĕм, çынна хаклама вĕрентĕр терĕм.
ФЕНЯ. Эппин эс Шурикпе лере тĕл пулман та-и?
НЮРА. Эх, Феня, Шурике юратма пулать-и вара? Тен хăш-пĕрин кăмăлне каять те пуль, анчах мана ахаль парсан та кирлĕ мар. Ну, ăс кĕртсе илер-и каччăсене?
ФЕНЯ. Мĕнле?
НЮРА. Кĕвĕçтермелле вĕсене. Юри курмăш пулмалла, юратсан та юратнине палăртмалла мар. Хамăра хальхинчен урăхла тытмалла. Ан хăра, эп каччăсен психологине лайăх пĕлетĕп. Кутĕсене пăрăç сапсан, хăйсемех пирĕн ура айĕнче йăваланма тытăнаççĕ. Манăн пуçланă та ĕнтĕ, ав хăй мана юратнине хут çине пичетлесе тĕнчене сарать. Санăн Шурикна та тапратса ямалла. Юрĕ, эп каям-ха, анне лавккана пыма хушрĕ, тăварлă килька илсе килнĕ, çын нумай, пĕччен сутса ĕлкĕреймеп тет. *(Каять.)*
ФЕНЯ. Анне! Анне теп!
МАЮК *(тухать).* Мĕн пулчĕ? Çав çыни çиен килмерĕ пулĕ те?
ФЕНЯ. Çук.
МАЮК. Ах, хĕрĕм, яла Хăрахкассинчи Вова килнĕ, вăл маньяка тухнă тет, çынсен пуçĕсене касать тет.
ФЕНЯ. Пĕлетĕп, илтнĕ.
МАЮК. Пĕлен пулсан тата мĕн урамра тăран, пытан часрах, алăка питĕрем.
ФЕНЯ. Вăл чăнласа касмасть, анне.
МАЮК. Вара ак çакăнта хăй чĕлхипе хăй каларĕ. Касса илетĕп те пĕр-пĕр çĕре çипăçтарап тет.
ФЕНЯ. Эсир ăнланман ăна. Вăл компьютерпа кăна касать.
МАЮК. Вара хăть те мĕнпе кассассăн та касать вĕт-ха, çынна вĕлерет.
ФЕНЯ. Вĕлермест вăл, анне, вĕлермест, сан мĕлкӳне кăна касать. Пыр-ха Кирук арăм лавккине кайса пулă илсе кил. Тăварлă килька кӳнĕ тет унта, Нюра каларĕ.
МАЮК. Эс тата çав хĕрпе калаçса тăратна-ха? Куçу умĕнче хăвăн йĕкĕтне çавăрса илчĕ вĕт.
ФЕНЯ. Çавăрса илмен, анне. Леш плакачĕсене те Хăрахкассинчи Вовчиках çипăçтарнă.
МАЮК. Вара Шурикпе Нюрка иккĕш мĕн мар-им-ха апла?
ФЕНЯ. Нюрка калать: ахаль парсан та кирлĕ мар мана Шурик тет.
МАЮК. И-и-и, сехрене хăпартса çӳреç, мур илесшĕсем.
ФЕНЯ. Пыр-ха часрах пулă кайса илсе кил, тем тăварлă япала çиес киле пуçларĕ.

**МАЮК**. Нюрка апла калать пулсан, халех кайса илсе килеп. Кăмакана шăпах чĕрĕлле улма лартнăччĕ. Пулăпа çиме лайăх пулать. Хутаç илсе тухам-ха. *(Кĕрсе каять.)*
**ФЕНЯ.** Пăнччук тете! Пăнччук тете, теп! *(Пӳртĕнчен Шурик тухать. Сиввĕн.)* Эп сана чĕнмерĕм, аçуна чĕнтĕм.
**ПĂНЧЧУК.** Пăрăн çул çинчен, куçăм та ан куртăр пĕреххут. Çырла пек хĕре çав катемпипе улăштартăн та, çын пулатăн-и эс? Çухал терĕм сана! *(Шурик кĕрсе каять.)* Каçар ĕнтĕ, Феня, çакăн пек пулса тухнăшăн.  Мĕн тесшĕнччĕ эсĕ çак?
**ФЕНЯ**. Кирук арăм лавккине тăварлă килька кӳнĕ тет, илмесре?
**ПĂНЧЧУК.** Çук, хамăрăн та ларсем тулли тулă, авăртма юрăхли те, выльăхсем валли те.
**ФЕНЯ** *(кăшкăрса).* Тулă темеп эп, пулă тет, тăварлă килька. Хаклă мар тет.
**ПĂНЧЧУК.** Килька тетне? Ан тĕлĕнтер. Халех кайса илсе килетĕп. Тавах, хĕрĕм. Тăварлă килька çиесчĕ тесе тахçантанпах ĕмĕтленсе пурăнаттăмччĕ. Тяттюка миçе каламан пуль тупса кӳрсе пар тесе. Маншăн тăкак курать-и вăл. Чим-ха, укçа илсе тухам-ха. *(Кĕрсе кайма тăрать те чарăнать.)* Эй, хăямат, вара юлашки укçапа тăватăмкун çĕпре илтĕмĕр-çке.
**ФЕНЯ.** Ман пур, парам-и?
**ПĂНЧЧУК.** Çур килалăх та пулин пар-ха эппин. Кайран хамах тавăрса парăп. *(Килĕ енне тĕллесе.)* Ав çав вĕренсе пĕтернĕ çĕре диплом çума кирлĕ пулĕ тесе ханша хурса лартрăмăр. Вăл пур пĕтĕм савăк кăмăла хуçса хучĕ.
**МАЮК***(тухать).* Кăмăлĕ çĕкленĕ-ха вăл. Дипломне илсе килнĕ-и вара хăй?
**ПĂНЧЧУК.** Ыйтма та ĕлкĕреймерĕм-ха. Чĕн пиçиххипе хĕнерĕм-хĕнерĕм те. Илсе килнĕ пулсан та, савăнасси пулмасть. Шурик ăçта вĕреннине Тяттюка суйса пурăнтăмăр-çке ку таран. Халь ак дипломне уçса пăхсан... Атăм вĕт вăл, атăм... Ăна курсан кушак аçи те кăмака айне тарса пытанать. Уншăн пулсан вĕт тăкак ан пултăр та, ак çак ытларах пултăр. *(Укçа кăтартать.)*
**МАЮК.** Ытлашшине кăна мар, тивĕçлине те памаççĕ-ха кунта. Калхуз пĕтсе лариччен  чун усрамалăх та пулин хăть паратчĕç, калхузĕ пĕтсе ларчĕ те, алла укça илменни виçĕ çул та çитет пуль. Юрать Феня почтăра ĕçлет.
**ПĂНЧЧУК.** Сан хĕрне кин тăвас тесе мĕнччен тĕмсĕлсе пурăнтăм, пулмарĕ иккен.
**МАЮК.** Пулĕ-ха, пулĕ, тури çырнă пулсан пулĕ. Çамрăксем вĕт юри нумай пăтранаç, хамăрах аса ил. Атя çула май каласа парăп. Пулла илсе пĕтерĕç тата.

*Шурик тухать те урам тăрăх кайма тăрать. Ытти плакатсене çурма пуçлать.*

**ФЕНЯ** *(тухать).* Мĕн, халех йăлăхтарчĕ-и Нюра? Малтан çакса тухать, халь çурса тăкать. Сан юратăву виçĕ минута кăна пырать-и?
**ШУРИК**. Эп юратмап ăна. Ялта та манран ялан йĕкĕлтетчĕ, училищера та, халь каллех пуçланă. Эп çакса тухман вăл плакатсене, ĕнен-ха мана, Феня.
**ФЕНЯ.** Ĕнентерсе памасăр ăçтан ĕненес-ха?
**ШУРИК.** Мĕнпе ĕнентермелле-ха вара ман сана? Эп капла та кунĕн-çĕрĕн сан çинчен çеç шутлатăп, мана тек никам та кирлĕ мар. Ак итле.
*(Гитарине тытать те выляса юрлать.)* Кăна эпĕ сан çинчен ĕмĕтленсе çыртăм.
**ФЕНЯ.** Ман çинчен? Суймастăн-и?
**ШУРИК**. Суять тет-ха тата. Суяп пулсан çакăнтах çĕр çăттăр.
**ФЕНЯ.** Юрĕ, тăр-ха апла çакăнта, çĕр çăтать-и сана çук-и, таврăнсассăн курăпăр.
**ШУРИК**. Эсĕ вара ăçта каятăн?
**ФЕНЯ.** Пенси валеçмелле ман, хаçатсем те.
**ШУРИК**. Пĕрле валеçĕпĕр. *(Феняна сумкине илсе.)* Ой, мĕн йывăрăш сан сумку. Мĕнле йăтса çӳрен ăна?
**ФЕНЯ.** Эпĕ хăнăхнă.
**ШУРИК.** Çук, эпĕ сана кун йывăрăш сумка йăттарса çӳретме пултараймастăп. Атя пĕрле валеçер.
**ФЕНЯ.** Çук, çынсем тем шутлĕç тата.
**ШУРИК.** Шутласан мĕн?
**ФЕНЯ.** Юнашар çӳреме эс ман упăшка мар вĕт.
**ШУРИК.** Кам? Упăшка? Эс вара качча кайма ĕлкĕрнĕ те-и?
**ФЕНЯ.** Çук, качча кайма кайман та-ха...
**ШУРИК.** Анчах каясшăн, эп сана тĕрĕс ăнлантăм-и?
**ФЕНЯ.** Паллах хам ĕмĕре пĕччен ирттерес çук ĕнтĕ, хăçан та пулин каймалла пулать. Авланас текен каччăсем ман тĕле те пулĕç-ха.
**ШУРИК.** Эппин сан такам пур. Эп вара шаннăччĕ. Эх, мĕн усси халь эп кунта килни.
**ФЕНЯ.** Эс малашне те шан.
**ШУРИК**. Шан, шан... Шана-шана шансах каян кунта. Хулара та пĕрне шана-шана пурăнтăм та...
**ФЕНЯ.** Хулара та хĕрсемпе çӳренĕ-и вара эс? Нюрапа-и?
**ШУРИК**. Эп вĕренмелле кăна çӳренĕ, опыт пухмалла. Пурнăçра пыл та çу пултăр тесен малтан хурине те, шуррине те курмалла тет.
**ФЕНЯ.** Куртăна вара хурипе шуррине?
**ШУРИК**. Кураймарăм çав...Вăл тытрĕ те пĕр бизнесмен хыççăн чаш! турĕ. Лешне пăхма хăрушă: хăй ак çапла та, ак çапла. *(Хăлаçланса кăтартать.)* Ăçтан кăна сиксе тухрĕç-ши çав бизнесменсем, çумăр хыççăнхи кăмпасем пек ĕрчесе кайрĕç. Пĕтĕм лайăх хĕрсене çавăрса илчĕç, суйланчăкĕсем вара юлчĕç.
**ФЕНЯ.** Камсем?
**ШУРИК**. Суйланчăксем, каччăсем çумне ирĕксĕр çипçăнакансем.
**ФЕНЯ.** Эпĕ те вара суйланчăк-и? Мана никам та çавăрса илмен-çке.

**ШУРИК.** Никам та-и?
**ФЕНЯ.** Никам та.
**ШУРИК.** Ку лайăх-ха, калатăп çав ялти хĕрсем апла мар тесе.
**ФЕНЯ.** Мĕнле – апла мар?
**ШУРИК.** Ну, мĕнлерех... Хăвах пĕлетĕн ĕнтĕ.
**ФЕНЯ.** Сăпайлăрах тесшĕн-и эсĕ.
**ШУРИК.** Во-во, шăп çапларах. Кĕпи аркисем вăрăмрах.
**ФЕНЯ.** Тепле çав, ялти хĕрсем хушшинче те тĕрлисем пур.
**ШУРИК.** Мĕн? Чим-ха, чим, эсĕ манпа тем шăвхăртса калаçма пуçларăн. Эсĕ манран тем пытаратăн-и?
**ФЕНЯ.** Çук-çке.
**ШУРИК.** Эпĕ лере сан çинчен ĕмĕтленсе пурăнатăп, çĕр çывăрмасăр юрăсем, сценарисем çыратăп санпа тĕл пулма, санпа туй тума, санпа ача çуратма...
**ФЕНЯ.** Ачасене те сценарипе çуратаççĕ-и вара?
**ШУРИК.** Сценарипе тĕплĕнрех пулать.
**ФЕНЯ.** Эх, Шурик, хĕр чĕрине туймастăн эсĕ.
**ШУРИК.** Мĕн туймалли унта. Эпĕ мĕн психолог-и?
**ФЕНЯ.** Психолог пулни кирлĕ-и вара кунта? Кунта... Эс унччен кун пек марччĕ, эс урăхлаччĕ.
**ШУРИК.** Унччен эс те кун пек марччĕ. Çавăнта кĕтсе тăрайман, çавăнта хăвна тытса чарайман. Кам вăл, бизнесмен-и? Эп ăна пĕлетĕп-и?
**ФЕНЯ.** Шурик, эс мана кӳрентеретĕн. Эп хам пирки каламарăм, эп ыттисем пирки каларăм.
**ШУРИК.** Эс вара ыттисем пирки ан кала, эс ху пирки çеç кала. Атту эпĕ мĕн пулса каятăп.
**ФЕНЯ.** Псих-и.
**ШУРИК.** Мĕнле псих? Эп псих мар, эп методист, эп культработник. Ман ĕç сценарисем çырса кану каçĕсем йĕркелесси, клуб ĕçне творчествăлла çĕнĕ юхăм кĕртесси. Эс вара мана кунта...
**ФЕНЯ.** Эппин эпир санпа пĕр-пĕрне ăнланмастпăр. Хула улăштарнă сана.
**ШУРИК.** Çук, хула мар, пурнăç, вăхăт çынна улăштарать.
**ФЕНЯ.** Шкулта вĕреннĕ чухне эс хĕрсемпе калаçма мар, куçран пăхма та вăтанаттăн. Хулара вара лайăх опыт пухнă пулмалла.
**ШУРИК.** Хулара унта вĕрентекенсем пур, сценари çырса паракансем пур мĕн хыççăн мĕн тумаллине, кам хыççăн кам каламаллине.
**ФЕНЯ.** Хăçан ача çуратмаллине те пуль. Эх, Шурик, артист эс.
**ШУРИК.** Эп артист мар.
**ФЕНЯ.** Клуб ĕçченĕсем пурте артистсем пуль вĕсем.
**ШУРИК.** Тен кирлĕ те вăл хăш чухне артист пулни. Ак пирĕн анненех илер. Унпа епле артисланмасăр тăрăн? Вăл мана хăйĕн çулĕпе ярасшăнччĕ, эп культпросветучилище пĕтернине пĕлсен халь, пĕлместĕп мĕн пулассине те. Тен килтен те хăваласа кăларса ярать ак. Феня, халĕ маншăн санран çывăххи никам та çук, пулăш мана.

**ФЕНЯ.** Мĕнпе пулăшайăп-ши сана, Шурик, эп сценарисем çырма пĕлместĕп çав.
**ШУРИК.** Ман сценарисем çырнисем те нумай. Эс манпа юнашар кăна пул.
**ФЕНЯ.** Эпир капла та юнашар пурăнатпăр вĕт.
**ШУРИК.** Эп пĕр килте, арлă-арăмлă пуласшăн санпа.
**ФЕНЯ.** Арлă-арăмлă? *(Тăнсăр кайса ўкет.)*
**ШУРИК.** Феня! Феня! Мĕн пулчĕ. Феня! Вилсе выртмарăн пулĕ те.
**ФЕНЯ.** Ах, Шурик...
**ШУРИК.** Тавах турра, вилмен. Атту хама ответ тыттаратчĕç вĕт.
**ФЕНЯ.** Кĕтмен-туман çĕртен каланипе чĕре тапма пăрахрĕ пулмалла.
**ШУРИК.** Атя-ха сак çине ларар. *(Феняна йăтса илет.)* Фу, хĕр çакăн йывăрăш пулать-и вара, пĕтĕм çан-çурăм тарласа кайрĕ.
**ФЕНЯ.** Икĕ чĕре пĕрлешсен çан-çурăм кăна мар, тем тарласа кайĕ-ха.
**ШУРИК.** Феня...
**ФЕНЯ.** Шурик...
**ШУРИК.** Ку шăлт эпир вĕреннĕ чухне юратакансен кунĕнче тунă сценаринчи пекех пулса кайрĕ.
**ФЕНЯ.** Унта та хĕрĕ тăнсăр пулса ўкетчĕ-и?
**ШУРИК.** Аха, унтан каччи хĕрне йăтса илетчĕ те хыттăн чуптăватчĕ. *(Феняна чуптăвать.)*

*Тяттюк килет, вăл аллине пуш сумка тытнă. Çамрăксене курсан ўсĕрсе илет.*

**ФЕНЯ** *(вĕçерĕнсе).* Ой! Здравствйуте, Тяттюк ап... Каçарăр, Татьяна Ивановна.
**ТЯТТЮК** *(йĕкĕлтесе).* Здрасте, здрасте.
**ШУРИК.** Анне-çке. Кўр пулăшам. *(Сумкине илме тăрать.)*
**ТЯТТЮК.** Çук ĕнтĕ. Пуш сумкана мĕнле те пулин хамах йăткаласа çўрĕп. Эс тулли сумкаллисене пулăшма ытларах кăмăллатăн пулас.
**ФЕНЯ.** Çук, мана пулăшма кирлĕ мар, эпĕ хамах. Ну, эп каям-ха. *(Почта сумкине илсе каять.)*
**ТЯТТЮК.** Кай, кай. *(Сурса.)* Тьфу! Хĕр тени çакăн пек пулать-и.
**ШУРИК.** Анне, ма эс ун пек?
**ТЯТТЮК.** Тата мĕн темелле тет ман? Кăнтăр кунĕнче урам варринче каччăпа чуптăвăнса тăракан хĕре кин туса илсе кĕмелле мар-и тата?
**ШУРИК.** Илсе кĕрсен вара мĕн пулать. Феня лайăх хĕр, хăвăн куçу умĕнчех çитĕннĕ. Çитменнине эпĕ ăна тахçантанпах...
**ТЯТТЮК.** Мĕн... тахçантанпах?
**ШУРИК.** Пĕлмĕше персе ан тăр-ха, анне. Атту ху сисмен пуль.
**ТЯТТЮК.** Эппин эс ăна... Ах, чĕрем! *(Чĕрине ярса тытать.)* Тата ку кăна çитменччĕ ман валли. Амăшĕ тарăхтарни çитмест, хĕрĕ те пулин...
**ШУРИК.** Çапла, эпĕ ăна тахçантанпах юрататăп. Çавăнпа та ханшуна ытларах хурса ларт, кĕçех авланатăп.

**ТЯТТЮК** *(чăмăр кăтартса).* Ак çак куккиш-муккише куратна?
**ШУРИК.** Эс тилпĕрен вăрри çинĕ пулас, савăнас чухне...
**ТЯТТЮК.** Мĕн тесе савăнмалла тет ман? Маюк хĕрне кин туса кĕртеп тесе-и? Вăл çара çерçисемшĕн хăпартса лартрăм-и эпĕ çак çурта? Çав çĕтĕк çурăксемшĕн икĕ çул укçа тăкса техникумра вĕрентсе кăлартăм-и сана? Вăл, паллах, хаваспах килĕшĕ, анчах укça...Мĕнле майлă муллă-сумлă пулас тетĕн эс?
**ШУРИК**. Ĕçлесе.
**ТЯТТЮК.** Ĕçлесе никам та пуйайман-ха. Çавăнпа та Маюк хĕрĕ пирки çăвар та уçнă ан пултăр.
**ШУРИК.** Эп юратап ăна.
**ТЯТТЮК.** Юратап... Юратнипе тутă пулмастăн. Халь расчетпа авланаç. Хĕр тенин хваттерĕ пултăр, машини пултăр, ашшĕ-амăшĕ пуян пулччĕр. Маюк хĕрĕн вара мĕн пур? Нимĕн те. Пур ман палăртнă пĕр хĕр. Çавнах кин тăватăп.
**ШУРИК.** Эсĕ хăть те кама кин ту, анчах та эпĕ хам юратнинех илетĕп.
**ТЯТТЮК.** Феня саркаланса пурăнтăр тесе çак çурта нушаланса туман эп.
**ШУРИК**. Эс кăна мар-çке, атте те нушаланнă.
**ТЯТТЮК.** Атте... Аçу çине шаннă пулсан... Ах, ма тарăхтаратăн-ши эсĕ мана. Дипломна кăтарт-ха хăть.
**ШУРИК.** Эпĕ ăна мĕн-ха...
**ТЯТТЮК.** Мĕн, халь те памарĕç-и? Татах вĕренмелле-и? Татах укçа тăкмалла-и ман? Памастăп, тек пĕр пус та памастăп.
**ШУРИК**. Дипломĕ кĕсьерех, анчах...
**ТЯТТЮК.** Мĕн тата?
**ШУРИК** *(амăшне ыталаса).* Анне, эп сана юрататăп. Пĕлетĕн-и, эп сана питĕ хытă юрататăп. Эс манăн питĕ лайăх, ырă, эс çут хĕвелтен те ăшăрах, çăл шывĕнчен те тасарах, эс пуринчен те хитререх...
**ТЯТТЮК.** Мĕн турăн? Тата мĕн амакĕ сиктерсе кăлартăн?
**ШУРИК.** Анне, эс ан пăлхан, сан пăлханма юрамасть. Сан кăмăлу мамăк пекех çемçе, çавăнпа та эс усал пулма пултараймастăн.
**ТЯТТЮК**. Кăтарт часрах дипломна!
**ШУРИК.** Ик куç тулли пăхса тăранма çук-çке сан çине, анне. Кил-ха хăть чуптăвам. *(Тяттюка чуптума тăрать, леш ăна сирсе ярать.)*
**ТЯТТЮК.** Йăпăлтатса ан тăр кунта! *(Шурик кĕсъинчен диплом кăларса илет, вулать те чĕрине ярса илет.)* Ай, чĕрем! Ай, чĕрем. Ай, чĕрем...
**ШУРИК.** Каларăм вĕт сана ан пăлхан тесе.
**ТЯТТЮК.** Кам ăс пачĕ? Кам хĕтĕртрĕ? Аçу-и, эп ăна çиччас... *(Килне кĕме тăрать.)*
**ШУРИК.** Вăл килте мар, Маюк аппапа таçта кайрĕç.
**ТЯТТЮК.** Кампа? Маюкпа?! Ай, чĕрем... Чĕрĕллех шăтăка чикетĕр вĕт иккĕнлетсе. Çынсен упăшкисем те, ачисем те те савăнтарса кăна тăраç, эсир вара...
**ШУРИК.** Çынсен амăшĕсем савăнма пĕлеççĕ.

**ТЯТТЮК.** Мĕн тесе савăнмалла тет вара ман? Ывăл ыйткалакана вĕренсе тухрĕ тесе-и? Ыйткалакан пулан вĕт эс, ыйткалакан пулан. Аçу та ыйткалакан, эс те ыйткалакан.
**ШУРИК.** Мана хамăн специальность килĕшет.
**ТЯТТЮК.** Ейкеленме, çын култарма, тринкки сикме, халăх умĕнче чуптăвăнма – ак мĕн тума килĕшет сана. Укçа вара? Ăçта укçа?!
**ШУРИК.** Мĕнле укçа? Укçара-и вара телей? Чун валли нимĕн те пулмасан...
**ТЯТТЮК.** Тата мĕнре пултăр телей? Укçаллă çын кăна халь тутă, укçаллă çын кăна халь числă, укçаллă çын кăна халь вăйлă.
**ШУРИК.** Мĕне вĕренмеллеччĕ вара ман?
**ТЯТТЮК.** Вăрра, ак мĕне вĕренмелле халь.
**ШУРИК.** Ман вăрă пулас килмест.
**ТЯТТЮК.** Кам вăрă мар халь? Пурте вăрлаççĕ, пурте çаратаççĕ. Кам сахалрах, кам  ытларах – уйрăмлăхĕ те çавăнта кăна.
**ШУРИК.** Эс вăрлама хăнăхнă та , пурне те вăрă тесе шутлан, мана та çав еннех чышан. Анчах та ман сан пек кукăр алăллă пулас килмест.
**ТЯТТЮК.** Эс кунта ман шĕвĕн çине пусса ан тăр! Эп вăрласан та пĕлсе вăрлап, расчет туса. Эпĕ вĕт сана, тăмсая, вĕрентсе кăларас тесе, çак çурта çĕклесе лартас тесе, çынла пурăнас тесе граммран грамм чакарса, метртан сантиметр чакарса, ик пите кĕççе çĕлесе... Эс вара мана тав тăвас вырăнне... Ых! Вăрă  пулсан та пачутра эп. Татьяна Ивановна та Татьяна Ивановна тесе çеç тăраç мана.
**ШУРИК.** Халь темеççĕ вĕт.
**ТЯТТЮК.** Кам темест? Маюк пеккисем темеç, Кирук арăмĕ пеккисем темеç. Ĕлĕк ман лавккара ĕçленĕ чухне виçе патне те пыртарман эпĕ ăна, урай çутарнă та мишук вăйтарнă. Халь хăй лавкка уçса, халăх мулне çаратса пуйса кайрĕ те паллами пулчĕ вĕт. Ма самани улшăнчĕ-ши? Ĕлĕк чух ялĕпе те ман лавкка кăначчĕ, халь вара кашни ăçтиçук лавкка уçа пуçларĕ.  Машинисене те çĕнетсе кăна тăраççĕ. Ну, темех мар-ха, Кирук арăмĕнчен пурпĕр кая юлмастăп. Лавккана та райпоран сутăн илетĕп, машина та илетĕп...
**ШУРИК.** Машина? Чăнах илетпĕр-и?
**ТЯТТЮК.** Ан савăн, сан валли мар. Хамран кулакансене тавăрма. Сана вара малашне те эп хушнă пек тумасан, шăвăç чуман кăна лекет. Мĕн чухлĕ шантăм эпĕ сана хам çулпа кайĕ тесе. Кооперативный техникумран расчет тума вĕренсе килет-ха тесе кĕтсе тăратăп вĕт сана. Тĕрĕссине пĕлнĕ пулсан пĕр пус тыттарнă пулăттăмччĕ-и эпĕ сана? Ых! *(Шурик пуçне шаккаса.)* Ак çак кăттялукупа ним чухлĕ те шутламастăн вĕт-ха эс. Кучченеç илсе килтĕне хăть?
**ШУРИК.** Ху мĕн илме каласа янине илсе килтĕм. Ак валидол. *(Эмел кăларса парать.)*
**ТЯТТЮК.** Каларăм вĕт... Ах, чĕрем. *(Чĕрине ярса тытать.)*

*Пăнччукпа Маюк килеççĕ. Пăнччук мăйĕ çине пĕр çыхă кăлинтăр çакса янă,  Маюк банан кавлет.*

**МАЮК.** Юрать хăть çакăн пек  лавккасем уçма пуçларĕç. Атту унччен кун пек тутлă япаласене лавккаçсем пирĕн пеккисене кăтартман та. Халь ак мĕн çиес килет, çавна илсе çиме пулать.
**ПĂНЧЧУК.** Чăн та, райпо лавккинче нимех те çук çав.
**МАЮК.** Ак, Шурик мар-и çав?
**ШУРИК.** Эпĕ, Маюк аппа, здрасте. Эпĕ паçăр сире кăшкăртăм, эсир вара аттепе çаврăнса пăхмасăрах таçта васкаса кайрăр.
**МАЮК.** Эпир пулла кайрăмăр.
**ТЯТТЮК.** Ăçта?!
**ПĂНЧЧУК.** Пулли лайăх...
**ШУРИК.** Тытайрăра вара?
**ТЯТТЮК.** Эп ĕçре пилĕк авнă чух эсĕ ют арăмпа пулă тытса çӳретĕн-и-ха?
**ПĂНЧЧУК.** Пулли çуллă, çисе тăранмалла мар.
**ТЯТТЮК.** Эп сире çиччас пулă çитереп. Çуллине мар, шăрпăллине *(Хулă тытать.)* Ав ма ĕçе кайман иккен эс, вăрттăн шухăш пулнă сирĕн*. (Хуллипе Пăнччука хăвалать.)*
**ПĂНЧЧУК.** Калхуза ĕçе çӳренин мĕн усси, пурпĕр ĕç укçи тӳлемеççĕ.
**МАЮК.** Тяттюк, чим-ха, тĕрĕс ăнлан-ха. Пĕччен хĕрарăм тесе мана такам вырăнне ан хур-ха.
**ТЯТТЮК.** Тата кам вырăнне хумалла ман сана?
**ШУРИК** *(пулă çисе).* Ой, тăварлă та.
**ТЯТТЮК.** Тăварлă пулĕ кунта эп килтен  пăрăнасса кăна кĕтеç пулсан.
**ШУРИК.** Пулли тăварлă теп.
**ТЯТТЮК.** Мĕнĕ?
**ПĂНЧЧУК.** Ăнлантарса партармастăн вĕт ху. Кирук арăмĕн лавккине кайса килтĕмĕр эпир. Юрать Феня систерчĕ, атту пире черет çитиччен пуллине илсе пĕтеретчĕç.
**ТЯТТЮК.** Ма Кирук арăмне тупăш туса çӳретĕн вара эс? Ун лавккинчен мĕн те пулин иличчен...
**МАЮК.** Сан лавккунта тăварлă  пулă çук-çке-ха.
**ТЯТТЮК.** Эс тем, Маюк, юлашки вăхăтра тăварлă апат юратма тытăннă.
**МАЮК.** Эп мар, Феня тăварлă апат çиес килет терĕ те.
**ТЯТТЮК.** Кам? Феня? Шурик, эс ăна мĕн те-и?.. Çук, эс мар вĕт, эс мар, урăхxи. Кала «эп мар» тесе, кала ăш çунтармăн, кала çуннă капăртма хăраххи.
**ШУРИК.**  Анне...
**ТЯТТЮК.**  Мĕн  туса хутăн эс, чараксăр çилхăван? Кампа çыхлантăн? Эп ăс панă пек тумасăр тăрри шăтăк чаплашкупа ма çынсене ырă тăван?
**ШУРИК.** Чарăн-ха эс!
**ТЯТТЮК.** Эс мана халь тин чарса ан тăр. Ху заводит туса ятăн. Хăвăн чарăнмаллаччĕ, аçу хăраххи. Иккĕнлетсе мана чĕрĕлле шăтăка

чикетĕр. Мемме, пиçмен пашалу, çынпа сăмах чĕнсе калаçма пĕлместĕр, ун пеккине вара...
**МАЮК.** Кай ĕнтĕ, веçех тусса кайрĕ. Неушлĕ намăс мар сана, Тяттюк?
**ТЯТТЮК.** Намăс? Ма мана намăс пулмалла? Сире намăс пулмалла. Ан ĕмĕтленĕр, пурпĕр эсир шутланă пек пулмасть. Сирĕншĕн çуратса яман эп ывăла.
**МАЮК.** Юрĕ, пире тирке-тирке асту тирĕк тĕпĕ ан юлтăр ху валли. *(Кĕрсе каять.)*
**ПĂНЧЧУК.** Пирĕн унпа ĕмĕр ĕмĕрлемелле мар, кама савать - çавна илтĕр.
**ТЯТТЮК.** Çук çынна кам савтăр хальхи саманара?
**ШУРИК.** Атте, мĕн пулнă пирĕн аннене?
**ПĂНЧЧУК.** Килтен тухса каяс патнех çитнĕ ĕнтĕ эп. Кашни кун укçа, укçа... Çынсене ăмсаннипе çурăлса каяс патнех çитнĕ. Вăл чухăннине те, пуяннине те тиркемелли тупать. Ак çакăнта вунă мăйракалли килсе кĕрсен, ăна парăнтармалли меслет те шыраса тупать.

*Нюра иртсе пырать.*

**НЮРА.** Мĕнле, Пăнччук тете, пулли тутлă-и?
**ПĂНЧЧУК.** Тутлă кăна-и кунта. Урăм-сурăм тутлă.
**НЮРА.** Паян пулă лайăх сутăнчĕ тет анне, вăтăр пинлĕх тупăш пулчĕ тет.
**ТЯТТЮК.** Мĕн чухлĕ? Ах, чĕрем*! (Сакă çине кайса ўкет.)*
**ШУРИК.** Вилсех каять-и ĕнтĕ.
**ПĂНЧЧУК.** Вилет сана, асту...
**НЮРА.** Ой, Шурик, эс вара ялта-и? Хăçан килтĕн? Салам.
**ШУРИК** *(хăй тĕллĕн).* Ку кăна çитменччĕ. *(Нюрана.)* Салам. Атте, тен ăна пульницана ăсатар?
**ПĂНЧЧУК.** Захар Иванч патне-и? Мĕн усси унран, вăл диагноз лартма та пĕлмест. Сиплеме те малтанласа хăйĕн пăшатанĕпе купарчаран ик-виçĕ хут тĕтĕрет те, виç кунтан та тăрса ларса картла выляма тытăнаймасан руйун пульницине ăсатать. Пўртех илсе кĕрер. Тяттюк. Тяттюк теп, атя пўрте. *(Çавăтса илсе кĕрсе каять, Шурик те кĕресшĕн.)*
**НЮРА.** Шурик,васкатăн-и?
**ШУРИК.** Эп мĕн... Ман...
**НЮРА.** Ним чухлĕ те улшăнман иккен эсĕ. Çаплипех мăк-мак. Тĕлĕнмелле каччă эс. Шурик, эс халь те пĕчченех-и?
**ШУРИК.** Ма вара пĕччен пулмалла тет ман?
**НЮРА.** Сан кам та пулин пур-и халь?
**ШУРИК.** Пур ĕнтĕ, атте пур, анне пур.
**НЮРА.** А-а-а, вĕсем çеç пурри тем мар-ха. Вĕсем манăн та пур, анчах пурпĕр хама тăлăххăн туятăп.

МАЮК *(вăрттăн итлсе тăрса).* Ак тамаша, ку Нюрка ман пулас кĕрĕве çавăрса илсешĕн мар-и çак? Плакачĕсене те хăйех çапса тухнă пуль апла вăл. Ма килсе кĕчĕ-ха вăл яла?
ШУРИК. Мерседесли вара ăçта?
НЮРА. Охо, эс кĕвĕçме те пĕлетĕн-и? Эппин эс чăн-чăн каччă пулса çитнĕ пулмалла. Мерседесли çук çав ман, ырă çынах пулмарĕ вăл. Унпа пĕл пуличчен манăн ялан юрлас килетчĕ, халĕ вара ӳлес килет.
ШУРИК. Тăмана пек-и?
НЮРА *(йĕкĕлтесе).* Ӳхĕ пек! Эх, Шурик, ăш çунтармăш эс. Шкулта вĕреннĕ чух ман ятпа юратуллă сăвăсем çыраттăн, куçран пăхсан вара нимĕн те калаймастăнччĕ. Халь хăть кала-ха пĕрре те пулин юратап тесе.
ШУРИК. Эп ун чухне юрату мĕнне те ăнланман.
НЮРА. Халь ăнланатăп тен апла. Мĕн-ха апла вăл юрату? Кăтарса пар, эп те пĕлем. Пысăк и вăл пĕчĕк-и, пылак-и вăл йӳçĕ-и, вăрăм-и вăл кĕске-и?
МАЮК *(сиксе тухса).* Ах, вăрăм-вăрăм та пирĕн ял урамĕсем. Çав вăрăмăша кунĕпе сумка йăтса çӳре-ха. Халĕ те Феня почта валеçсе пĕтерейместь, кăмакари чĕрĕлле улма та сивĕнсе кайрĕ ĕнтĕ. *(Юри.)* Ак, чĕмере, кунта çамрăксем ларнă иккен. Сирĕн калаçăвăра татрăм пулĕ, каçарăрах ĕнтĕ мана.
ШУРИК. Çук, эпир калаçман.
НЮРА. Калаçмасан мĕн туса тăратăр вара кунта?
ШУРИК. Ахаль çеç. Аха-и, Нюра?
НЮРА. Аха, эсĕ чăн-чăн клоун, шăпах клубра ĕçлемелли çын.
МАЮК. Нюра, вара пaçăр санран ыйтма мансах кайрăм. Вара яла мăшăрупах килтĕне, пĕччен кăна-и?
НЮРА. Мăшăрланма ĕлкĕреймерĕм çав-ха эп, Маюк аппа. Мăшăрланса ярасшăн та-ха, мăшăр тупаймастăп, тивĕçлисем çукпа пĕрех. Çавăнпа ялта пĕрне ертсе кайса пулмĕ-ши тетĕп-ха.
МАЮК. Вара ял çинче, имĕш, мăшăрланнă теççĕ те, мăшăру та ах чаплăскер тет, имĕш. Çав тери юратап тесе çырать тет пур çĕре те.
НЮРА. «Имĕш» мăшăр кăна пулнă пуль çав вăл.
МАЮК. Вара имĕш пулсан та мăшăр. Çукки мар ĕнтĕ. Хальхи çамрăксем юратма та чикĕрен каçса кайсах юратаççĕ тет те, имĕш, чикĕ леш еннех качча каяççĕ тет çапла. Нимĕçне те, япунне те, тĕрĕкне те, чиканне те ниркемеççĕ тет, имĕш. Ах, рахатленсе пурăнаççĕ тет, имĕш.
НЮРА. Рахатленсе пурăнаç пулсан ма хĕрне халь те качча памастăн вара ху?
МАЮК. Феня яхăнне те ямасть çав. Ялти пĕр каччăна куç хывнă та, ыттисене яхăнне те ямасть. Ялан ăна кĕтсе ларать.
НЮРА. Кĕтсе ларнипе качча каяймастăн. Халь урăх вăхăт, арçынсем шĕвелнĕ халь: хĕрсемпе калаçма хăраççĕ, салтака кайма хăраççĕ, хĕрĕсене мар, хăйсене хăйсем те хӳтĕлеме хăраççĕ. Çавăнпа та пирĕн хамăрăн вĕсене качча илме тытăнмалла.
ШУРИК. Ун пек закон çук вара, закон тăрăх йĕкĕтĕн качча илмелле.

**НЮРА.** Сан законна пăхăнсан, халăх тахçанах пĕтсе лармалла. Хĕрарăма турри çĕр çине мĕншĕн туса янине те ăнланмастăр та-ха эсир. Чăн-чăн юрату мĕнре иккенне пушшех те. Юрать хĕрĕсем кăшт чĕрĕрех, çиле хирĕç тăрса та пулин ача туса параççĕ. Мĕскĕнсем эсир, арçынсем, тата пиçмен пашалусем. *(Каять.)*
**МАЮК.** Вара пурте пиçмен пашалу мар та-ха ĕнтĕ. Начар çын валли начарри тупăнать, лайăх çын валли лайăххи тупăнать.
**ШУРИК** *(хăй тĕллĕн).* Хăçан ман çума çулăхма пăрахать-ши вăл? Хулара - хулара пĕрмай çулăхатчĕ, ялта -ялта çулăхать. Пит кирлĕ мана каччăсене тапăнакан хĕр. Шкулта вĕреннĕ чухне хам çине никам та пăхманнипе кĕнекерен пĕр-икĕ сăвă çырса илсе панăччĕ те, кайран хăпма пĕлмест вĕт. Маюк аппа, эп халь вĕренсе пĕтертĕм ĕнтĕ, ĕçлеме пуçларăм. Эсĕ хăвах пĕлетĕн эпир Феняпа... Эс хирĕç пулмăн-и, енчен те эп ăна...
**МАЮК.** Ма хирĕç пулас ман? Вара Феняпа иксĕр чисти хуппипе çупăлчи пекех туйăнатăр та, çавăнпа та хăть те мĕн тусассăн та, манран чару çук. Вара каламанни пултăр та, аçупа та туррăн кун иксĕр пĕрле пуласса кĕтсе пурăнатпăр. Анчах ... Ах, Шурик, сан хăвăн кăшт чĕрĕрех пуласчĕ. Хĕр тени вĕт вăл кăшт хыпашланине юрататъ, тыткаланине...
**ШУРИК**. Феня кутăнлашать çав вăл, çук та çук тет.
**МАЮК.** Эх, чĕмере, хĕр çăварĕнчи çук тени аха тенине пĕлтерет ĕнтĕ вăл. Çавна та ăнланмасан мĕн тума диплом панă вара сана? Ав, Феня та таврăнать. Юрĕ, эп кĕрем-ха, эсир калаçăр вара. *(Кĕрсе кайнă пек тăвать те итлесе тăрать.)*

*Шурик гитарине илсе юрă юрлать, Феня килет.*

**ФЕНЯ.** Кам çинчен шухăшласа юралатăн?
**ШУРИК.** Ыйтмасăрах паллă-çке...
**ФЕНЯ.** Эпĕ паçăр кунтан Нюра тăнине куртăм.
**ШУРИК.** Çук, эп ун çинчен шутламан. Эпĕ халĕ хамăн пĕтĕм юрăсене сана халаллатăп. Клубра ирттерекен кану каçне те сана халалласа ирттеретĕп.
**ФЕНЯ.** Мĕн ирттересшĕн вара эс унта?
**ШУРИК**. Конкурс. Вăл «Пĕрре курсах саврăм-ши?» ятлă пулать. Анчах та мана малтанласа санран пулăшу кирлĕ. Конкурс ирттерме пирĕн пĕр виç-тăватă мăшăр тупмалла, хĕрсемпе каччăсене. Пĕрремĕш мăшăрĕ, паллах, иксĕмĕр пулатпăр.
**ФЕНЯ.** Çук, Шурик, каçар та, эпĕ ун пеккине пултараймастăп.
**ШУРИК.** Унта ним йывăрри те çук. Ак хамăр пĕрне-пĕри епле юратнине кăтартса паратпăр та, пулчĕ те.
**ФЕНЯ.** Эсĕ мана юрататăн-и вара?
**ШУРИК.** Тахçантанпах.
**МАЮК.** Тавах турра. Хулпуççи çинчен пĕр пăтлă чĕрес илсе пăрахнăнах туйăнса кайрĕ.

**ШУРИК.** Анчах кун пирки эпĕ сана ку таранччен калама вăтаннă, халĕ ак...
**ФЕНЯ.** Халĕ эсĕ опытлă çав.
**ШУРИК.** Эпĕ опыт кĕнекесем тăрăх пухрăм. Ĕненместĕн-и? Кил-ха апла кăтартса парам... Вăт пĕр кĕнекинче хĕрĕпе каччи тĕлпулсассăнах... *(Чуптума пикенет.)*
**ТЯТТЮК САССИ.** Эс мĕн тăван? Ма пĕччен апат çиме лартăн, ывăлу ăçта?! Тупса кĕр часрах! Апат сивĕнсе кайсан ман ун валли тепре ăшăтмалла-и?
**ШУРИК.** Ах, ку аннене, веçех пăсса хучĕ. Мĕн çинче чарăнтăмăр-ха эпир?
**ФЕНЯ.** Эс тем кăтартса парасшăнччĕ.

*Пăнччук тухать, ун патне Маюк вăрттăн пырать те, хăйпе илсе каять.*

**ШУРИК.** Кăтарса парасшăнччĕ? Мĕн? А, аса илтĕм. Пирвайхи хут мĕнле тĕлпулнине кăтартса памалла пулать пирĕн вăл конкурсра, юрату мĕнле амаланса пынине, пĕр-пĕринче мĕн илĕртнине... Çепĕç сăмахсем унта, интереслĕ ăмăртусем пулаççĕ. Эпĕ сценарине те çырнă ĕнтĕ. Тĕрĕссипе унта хăвăнтан хушса каламалли те кăшт кăна.
**ФЕНЯ.** Эпĕ тем пекех пулăшăттăмччĕ те сана, анчах хăратăп. Эпĕ нихăçан та сцена çине тухса курман.
**ШУРИК.** Эпир малтан репетицисем тăватпăр. Пар-ха аллуна. *(Феня аллине парать.)* Шуракăшăм эсĕ манăн, Феня. Эс мана «ăмăрткайăкăм» те.
**ТЯТТЮК САССИ.** Пиçмен пашалу эс! Ывăлу та пиçмен пашалу, эсĕ те, ним усси те çук сиртен.
**ШУРИК.** Татах пăсса хучĕ ку анне. Ну, кала атя, ăмăрткайăкăм те.
**ФЕНЯ.** Çук, Шурик, кама та пулин урăххине туп. Эпĕ сцена çине пăшалпа тĕллесессĕн те тухмастăп. Çук, çук, ан та ӳкĕтле.
**ШУРИК** *(хăй тĕллĕн).* Çук тет-ха, эппин килĕшет. Эп халь пĕлетĕп хĕр çук тени вăл аха тенине. Феня, ма манăн урăххине юрататăп тесе каламалла-ха? Манăн çав сăмахсене сана калас килет. Е санăн кам та пулин пур-и, унран хăраса ку конкурса хутшăнмастăн-и?
**ФЕНЯ.** Çук манăн никам та.
**ШУРИК.** Çук? Ма аха мар вара?
**ФЕНЯ.** Çуккине пур теейместĕп ĕнтĕ. Эс вара юратан пулсан сăмахусене халĕ куçран кала, анчах хут çине çырнисене мар, чĕререн тухаканнисене.
**ШУРИК.** Вара хут çине те эпĕ чĕреренех çырнă ĕнтĕ, кашни мăшăр валли темиçе кун пуçа вата-вата чунтан-чĕререн çыртăм.
**ПĂНЧЧУК.** Хĕре пистерет иккен хăйĕн пуклак чĕлхипе.
**МАЮК.** Пĕр çивĕчлĕхĕ çук вĕт-ха сан ывăлун. Çавна кĕрӳ тăвасшăн хам тата.
**ФЕНЯ.** Ăнланмастăн эсĕ мана, Шурик.

ШУРИК. Эс ху мана ăнланмастăн. Почта урлă çырăнса ятăн пуль-ха пĕр-пĕр бизнесмена. Унта хаçатсем çине авланас текеннисене нумай пичетлеç.

*Вова килет, вăл негр маскипе. Пăнччукпа Маюк патне йăпшăнса пырать те вĕсене хыçалтан ярса тытать.*

ВОВА. Хенде хох!
МАЮК *(çари çухăрса чупса каять).*Апиçан! Апиçан!
ВОВА. Эс ма мана кӳрентерен? Кам апиçан кунта?
МАЮК. Ах, каптăрма,  калаçать-ха тата.
ПĂНЧЧУК. Апиçан мар вăл, негр çеç. *(Вована.)* Негр, негр, ты чуваш?
ВОВА. Чăваш, чăваш. Сан кăна чăваш пулмалла-и?
ПĂНЧЧУК. Чăваш негр пекех ĕçленине пĕлетĕп-ха эп, анчах та негр чăвашла калаçнине пĕрремĕш хут куратăп.
ВОВА. Куту айне вут хурсан чăвашла кăна мар, тутарла та калаçма вĕренĕн-ха. Шăлай?
ПĂНЧЧУК *(пуçне аха тесе сĕлтсе).* Шăлай, шăлай. *(Маюка.)* Эп шăл айне хунине ăçтан пĕлчĕ вăл?
ВОВА. Хĕрпе каччă калаçнине итлесе тăма вара аван мар.
ФЕНЯ. Анне, мĕнле намăс мар сана?
МАЮК. Эпир пăру шырама кăна тухнăччĕ, пăру киле таврăнман та. Юрĕ, таврăнĕ-ха, таçтах кайман пуль. *(Кĕрсе каяççĕ.)*
ВОВА *(маскине хывса).* О, Фенечка, ак ăçта иккен эсĕ. Эпĕ сана аран шыраса тупрăм. Мана шăпах эсĕ кирлĕччĕ.*(Шурике.)* Пăрăн-ха кунтан.
ШУРИК. Эп вообще-то... Вообще-то эпĕ Фенян каччи.
ВОВА. Эсĕ? Эс мар, эпĕ унăн каччи. Çапла-и, Феня?
ФЕНЯ. Çук.
ВОВА. Илтрĕн-и, аха терĕ.*(Хăмсарса.)* Брысь тенĕ сана! *(Шурик пăрăнса каять.)*
ШУРИК. Эх, Феня, эп сана лайăх хĕр тесе, эсĕ вара... *(Килне кĕрсе каять.)*
ФЕНЯ. Шурик!.. *(Вована.)* Ма килтĕн-ха эĕ? Веçех пăсса хутăн.
ВОВА. Феня, кала-ха, эс юрату мĕн иккенне пĕлетĕн-и?
ФЕНЯ. Çук, пĕлместĕп.
ВОВА. Мĕн, халиччен те юратса курман-и? Апла чап мĕн иккенне пĕлетĕн-и?
ФЕНЯ. Чап мĕн иккенне те пĕлместĕп çав, туйса курман.
ВОВА. Туйса куратăн, пĕтĕмпех туйса куратăн манпа пырсан. Сан пек хĕрсем мана питĕ кирлĕ.
Феня. Мĕн тума?
ВОВА. Империи тума. Хамăн глобальный сетьри глобальный империи. Уйăхне 30 пин çитет-и сана?
ФЕНЯ. 30 пин?
ВОВА. Лайăх ĕçлесен хушса тӳлеп. Тулькка малтан кала: саншăн юрату хаклă-и е чап-и?
ФЕНЯ. Туйса курмасăр епле калас-ха.

ВОВА. Туйса куратăн апла. Халлĕхе эс почтальонка-çке, ак çак журналсене салтаса пар-ха мана. Эп сана укçа паратăп.
ФЕНЯ. Мĕнле журналсем вара кусем? Чим-ха, вара ку Нюрка мар-и? Ку эсĕ. Вара эсир пĕрлешнĕ те-и? Хăш çĕршыва кайса туй тунă вара эсир? Тинĕс хĕрринче кунта эсир, пальмасем хушшинче туй тăватăр.
ВОВА. Канары утравĕ çине кайса пĕрлешрĕмĕр. Салат-ха тархасшăн, паянах салат, тулькkă Нюрка ыйтсан эп парса хăварнă тесе ан кала. Ак тыт укçа.
ФЕНЯ. Мĕне кирлĕ мана санăн укçу халь тин? Сана пула Шурик халь ман пирки тем шутласа кĕрсе кайрĕ ĕнтĕ.
ВОВА. Юрататăн-и ăна? Эпĕ те Нюрасăр пурăнаймастăп çав. Малтан пурăнапах пуль тенĕччĕ, анчах кайран... Вăт тем хăварчĕ вăл манăн ак çак чĕрере, вĕчĕлтетет кăна пĕр чарăна пĕлми. Кунĕн-çĕрĕн ун çинчен кăна шутлатăп. Манасчĕ, манаймастăп. Теприн çине пăхасчĕ. Мĕн чухлĕ чипер хĕр вĕт-ха йĕри-тавра. Ак эсĕ те хитре, чипер, пиçсе çитнĕ çырла пек, сĕлекесĕрех çăтса ямаллискер. Çук, кирлĕ мар, пĕри те кирлĕ мар. Вăл кăна кирлĕ. Юрĕ вара, эп вĕçтерем, ман ăна мĕнле те пулин ӳкĕте кĕртмеллех.. *(Васкаса каять.)*
ФЕНЯ. Лайăхах пăрăç сĕрсе янă пулмалла кăна Нюра. Шурике те кăштах тиврĕ пулмалла. *(Нюра килет.)* Нюра, сан Вовуна пула эпĕ кĕçех Шурике çухататăп. Килсе кĕчĕ те веçех пăсса хучĕ. Шурик вара кĕвĕçсе кĕрсе кайрĕ.
НЮРА. Мĕн, сан çумна çулăхрĕ-и?
ФЕНЯ. Çук, журналсем салтама пачĕ. Саламлатăп сана пĕрлешнĕ ятпа.
НЮРА. Эпир унпа нихăçан та пĕрлешмен.
ФЕНЯ. Кам пĕлет сире, те пĕрлешнĕ, те пĕрлешмен. Фотки те ĕненмелли, статьи те ĕненмелли, çамрăк мăшăрĕсем те эсирех.
НЮРА. Фотомонтаж ку. Журналăн страницине ӳкерсе илсе хамăрăн фоткасене кĕртсе хунă та, çĕнĕрен пичетлесе ылмаштарса хунă. Эп пĕлетĕп ăна: ял çинче пĕрлешнĕ тесе ят сарасшăн пулнă вăл. Эс ку журналсене салатрăн та-и?
ФЕНЯ. Ĕлкĕреймерĕм-ха.
НЮРА. Эппин кăмакана ыватăтатпăр. Пăхăпăр малашне тата мĕн шутласа тупĕ. Тата та салатма парсан систер мана.
ФЕНЯ. Эп пĕлместĕп ĕнтĕ халь мĕн тумаллине те.
НЮРА. Сирĕн Шурикпе мĕнле? Тĕл пулса калаçрăр-и?
ФЕНЯ. Калаçнин усси пулсассăнччĕ.
НЮРА. Юрĕ, хам пăрăç сапса яратăп эп ăна, туххăмрах санăн пулать.
ВОВА *(килет).*
Нюра, Нюрочка, тинех,
Тĕл пултăм иккен сана,
Атя иккĕн калаçар,
Сăмахăн вĕçне тупар.
НЮРА. Эп сана каларăм вĕт,
Ман хыçран тек ан çӳре.
Савса пурăн малашне

Виртуаллă хĕрсене.
**ВОВА.** Пуласлăх интернетра –
Вăхăт çавăн пек хушать.
Сайта кĕртнĕ хĕрсене
Сутсассăн укçа пулать.
**НЮРА.** Ĕçлесе укçа тăвăпăр,
Вăй хума халь ватă мар.
**ВОВА.** Кутăн укçа кĕнĕ чух
Ма çанăсем тавăрар?
**НЮРА.** Ик алă та ик ура,
Икĕ куç та пĕр чĕре.
Акă пĕтĕм цифрасем,
Тек кирли те çук вĕсем.
**ВОВА.** Эпир пурте цифрасем –
Компьютерти файлсем.
Килобайт та мегабайт
Пур япала виçисем.
**НЮРА.** Юрату та килобайт?
Чун-чĕре те мегабайт?
Мана кирлĕ юрату
Виртуалли мар, чăнни.
**ВОВА.** Пурнăçран кая юлса
Пурăнас килмест-ха ман.
**НЮРА.** Юратах интернетна,
Ытала компьютерна.
**ВОВА.** Нюра, сан укçаллă пулас килмест-и?
**НЮРА.** Укçу та кирлĕ мар, ху та кирлĕ мар. Ку ĕçне пăрахмасан ман енне утăм ан ту.
**ВОВА.** Урăх ĕç тума пĕлмеп эп, юрататăп хам ĕçе. Йăлăнатăп эп сана, ан уйăр мана унран.
**НЮРА.** Кай терĕм сана кунтан, куçăм ан куртăр сана!
**ВОВА.** Юрĕ, кайăп, меслетне сана тавăрмаллине интернетра шырама. Кайран таврăнатăп, кĕт. *(Каять.)*
**ФЕНЯ.** Нюра, мĕн пулчĕ, ма йĕрен.
**НЮРА.** Çĕтĕк-çурăк миллионера пула. Эп ăна юратать пуль терĕм, вăл вара хăйĕн компьютерне манран ытларах юрататать.
**ШУРИК** *(тухать).* Нюрка, эс килнĕ-çке, эпĕ шăпах сана курасшăнччĕ. Ман мăшăр пулатăн-и?
**НЮРА.** Мăшăр? Пулатăп.
**ШУРИК.** Апла пулсан атя халех пирĕн пата. Е эпĕ япăх каччă-и?
**НЮРА.** Каччи эс лайăх та-ха...
**ШУРИК.** Эсĕ тахçан ман çума хăвах çипçăнаттăн, сана юратса курас килет теттĕн. Паян шăп çав самант çитрĕ. Кил-ха кунта, чун савниçĕм. *(Нюрана ыталаса илет.)*
**ФЕНЯ.** Юрĕ, вăтантарса тăрам мар сире. Чипер вара.
**ШУРИК.** Чипер, чипер.

НЮРА. Ну, Шурик, эсӗ веҫех улшăннă иккен. Кун пек сана хăть те кам та пӗрре курсах савса пăрахӗ.
ШУРИК *(Фенясен енне).* Пӗрре курсах савса пăрахаҫҫӗ те ăна. Чăнласах саваҫҫӗ, хăшпӗрисем пек юрим-юрим мар. Вăт так вăт.
НЮРА. Эс мана чăнах та саватăн-и вара? Хальччен ăҫта пулнă вара эс?
ШУРИК. Опыт пухнă.
НЮРА. Кăна пӗлнӗ пулсан эпӗ сана тахҫанах ярса илеттӗм те, хамран вӗҫертместӗмччӗ. Эсӗ шкулта вӗреннӗ чухне мана юратуллă сăвăсем ҫырса пани халӗ те куҫ умӗнче. Пӗр сăввине халӗ те астăватăп:
Эп тинӗс ҫынни мар, анчах тем анлăш
Шыв урлă пурăнсассăн та халь эсӗ,
Эп нимӗскер шухăшласа тăмасăр
Сан патналла ишсе пымашкăн хатӗр.
ШУРИК. Эп ҫырман ăна, Шекспир ҫырнă.
НЮРА. Мана Шекспир мар, эсех ҫырса панăччӗ ҫав. Эс ун чухне манпа каҫхине тӗл пулса калаҫма сценари те ҫыртăм тенӗччӗ-ха. Интереслӗ ҫапах та, мӗн каласшăн пулнă эсӗ вăл сценари тăрăх, астăватăн-и?
ШУРИК. Маннă*. (Хăй тӗллӗн.)* Пăх-ха ăна, мана, кӳршӗ Ачине ҫӗтӗк-ҫурăк Паля ачипе ылмаштарать.
НЮРА. Мӗн каламаллине маннă пулсан, мӗн тумаллине хăть астăватăн-и?
ШУРИК. Ăна каласа тумаҫҫӗ.
НЮРА. Эс каламасăр ту. Халь эпир шăпах иккӗн ҫеҫ, никам та кансӗрлемест. Ну?
ШУРИК. Ну, Нюрка, пӗр ҫулăхсан хăпма пӗлместӗн вӗт-ха эс. Сан ҫинче-и-ха манăн шухăш. Кай-ха кунтан.
НЮРА. Вара ху чӗнтӗн вӗт, саватăп, мăшăр тăвап терӗн.
ШУРИК. Эп сана пурнăҫра мар, конкурсра мăшăр тăвап терӗм. Клубра ҫамрăксемпе конкурс ирттермелле ман.
НЮРА. Эп сана мана чăнласах качча илесшӗн тесе.
ШУРИК. Эп сана качча илме кăмака ҫинчен ӳкмен-ха.
НЮРА. Мӗн?! Ну, эп сана ку сăмахсемшӗн, Шурик...
ШУРИК. Ҫук, Нюрка, эп кăна сан пирки мар, Феня пирки...
НЮРА. А-а-а... Эп ман пирки тесе. Эсӗ асту, манпа чухне сăмахусене суйласарах калаҫ.
ШУРИК. Нюрка, юрӗ-ха ӗнтӗ, ан ҫилен-ха ӗнтӗ. Вăт, пӗри кутăнлашать, тепри кутăнлашать. Никам та конкурса хутшăнасшăн мар. Кампа ирттермелле вара ман ăна? Атту йывăр пуль ӗнтӗ сценари тăрăх пӗрне-пӗри савам пек тăвасси.
НЮРА. Эсӗ савмалли конкурс ирттеретӗн-и? Эсӗ-и? Вăт парать. Хăй савма пӗлмест, савмалли конкурс ирттерет.
ШУРИК. Хатӗр сценарипе мӗн ирттересси ӗнтӗ ăна.

**НЮРА.** Юрĕ, хутшăнса пăхам апла. Интереслĕ пулса кайрĕ-ха мана ку япала. Тулькка вĕт эпĕ пĕр тытăнсан савам пек кăна тумап, чăнласа савап.
**ШУРИК.** Куракансене чăнласа савнă пек кăтартса памалла та ĕнтĕ.
**НЮРА.** Атя репетици туса пăхар-ха апла. Мĕн темелле пулать ман сан сценарийў тăрăх, мĕн тумалла пулать?
**ШУРИК.** Унта-и? Унта... Çиччас, аса илем-ха.
**НЮРА.** Часрах аса ил,  тапратрăн тăк, чарăнса ан тăнă пултăр.
**ШУРИК.** Эс анваскат, атту эпĕ пăтрашăнса кайса йăнăш туса хума пултарап.

*Маюксен килĕнчен кĕвĕ илтĕнсе каять.*

**НЮРА.** Сĕрме купăс сасси. Феня мĕн, сĕрме купăс та калама пĕлет-и?
**ШУРИК.** Пĕлместĕп, ан ыйт манран.
**НЮРА.** Эпĕ санран ыйтмастăп, хампа хам калаçатăп. Эс мана ан итле, сценарине часрах аса ил. *(Тăнласа.)* Çук, кăна оркестр калать. Юратмастăп сĕрме купăс сассине, йĕнĕ пек янăрать.
**ШУРИК.** Тен вăл чăнах та йĕрет.? Ман çине кўренсе-ши?
**НЮРА.** Эс юрататăн-и? Эп санпа калаçатăп. Мĕн, йĕтĕр çăтрăн-и?
**ШУРИК.** Юрататăп çав, унсăр пурăнас та килмест. Вăл вара мана çав Вовчикпа...
**НЮРА.** Пиçмест ĕнтĕ санран. Йăлăхтартăн веç. Атя сценарисĕрех кăтартса паратăп сана мĕнле савмаллине. *(Шурике ыталаса илет.)*
**ШУРИК.** Нюрка, эс тулькка ĕрĕхтермесĕр. Кун пеккине ĕрĕхтерсе тумаççĕ, шутласа тăваççĕ. Атя тĕк ларар-ха.
**НЮРА.** Ман тĕк ларас килмесен?
**ШУРИК** *(хăй тĕллĕн).* Тен вăл Феня патне ĕçпе кăна килнĕ. Нюрка, сценари тăрăх сан халь аллусене те ирĕке яма юрамасть.
**НЮРА.** Ман юрамасан, сан ирĕке яма юрать-и хăть?
**ШУРИК.** Юрать, анчах патне çитсен кăна. Вăт, Нюрка, çапла.
**НЮРА.** Мĕн çапла?
**ШУРИК.** Йăнăш туса хутăм пулмалла эп.
**НЮРА.** Мĕн турăн вара эс? Эс йăнăшне те, йăнăш маррине те тумарăн-ха кунта. Репетицие çакăн пек тумаç пуль ĕнтĕ ăна. Кăштах тыткалаç пуль.
**ШУРИК.** Ăнланмастăн эсĕ мана, Нюрка. Манăн халĕ ăш çунса тухать. Йăлăнатăп сана, Нюра, илсе кай-ха çав Вовчика ялтан, атту вăл мана хĕрсĕр хăварать.
**НЮРКА** Вовчик мана мар çав, вăл халь Феняна юрататать.
**ШУРИК.** Пĕтрĕ иккен Феня, татăлчĕ манăн ĕмĕт. Мĕн  тумалла манăн халь?
**НЮРА.** Репетиции тумалла.
**ШУРИК.** Репетиции тăвас килет-и кун пек чухне.
**НЮРА.**  Итле-ха эс, сценарист, пуçласан пуçла, атту хам сценарисĕрех пуçлатăп. Ăнкартăн?

**ШУРИК.** Ăнкартăм. Çаврăн.
**НЮРА.** Каламаллине куçран пăхса кала.
**ШУРИК.** Куçран пăхса калаймастăп эпĕ
**НЮРА.** Эс арçын-и, арçын мар-и? Авланнă чухне те арăмна хыçне пăхса илетĕн-и? Сан патна чăн та карчăка сапунĕпе питне хупласа кӳрсе ямалла та...
**ШУРИК.** Ну, пĕр самант çаврăнса тăраятăн-и? *(Хăй тĕллĕн.)* Часрах шăвăнмалла кунтан. Фенянах ӳкĕте кĕртмелле.
**НЮРА.** Юрĕ, çаврăнтам. Атя.
**ШУРИК.** Ăçта?
**НЮРА.** Ниçта та. Атя пуçла, калаç, ту.
**ШУРИК.** Эс кунта мана вĕрентсе ан тăр. Сансăрах пĕлеççĕ мĕн тумаллине. Тумалли патне çитмен-ха кунта.
**НЮРА.** Пуçла-ха часра. Ман чарак пĕтет кунта.
**ШУРИК.** Çиччас. Эпĕ кунта. Феня çумра...
**НЮРА** *(çаврăнса).* Феня? Феня та кунта-и?
**ШУРИК.** Çук, Нюрка тесшĕнччĕ эпĕ. Çаврăн атя.
**НЮРА** *(кутăн çавăрнса тăрать).* Савса кураймап иккен паян.
**ШУРИК.** Вăт çавăн пек. Капла лайăх*. (Ерипен-ерипен аякка кайса пырать.)* Лайăх... Тата та лайăх... Питĕ лайăх... Калама çук лайăх... Тĕлĕнмелле лайăх... Халех пулать... Пулать... Пулчĕ... *(Çухалать.)*
**НЮРА.** Мĕн пулчĕ вара? Нимĕн те пулман-ха. Мана ним чух те лайăх мар. *(Çаврăнса.)* Шурик! Шурик теп! Ăçта масара кайса кĕтĕн эс? Тарса пытантăн-и? Эс манран çакăн пек куласшăн-и-ха? Ну, тепре курсассăн эп сана, хăть те мĕнле чăтса тăр вара. *(Каять.)*
**ШУРИК** *(йăпшăнса килет).* Тинех хăтăлтăм иккен. Арçурирен пĕрре те кая мар вара ку Нюрка. Эх, Феня, каçарăн-ши эсĕ мана? *(Маюксен алăкне шаккать.)* Феня! Феня, тух-ха. Тухмасть. Çиленнĕ ĕнтĕ. Ахалех кĕвĕçрĕм çав. Пултараймастăп эпĕ, Феня, сансăр пурăнма. Каçар ĕнтĕ эс мана, ухмаха.
**ФЕНЯ** *(тухать).* Каçаратăп.
**ШУРИК.** Феня! Чунăмçăм... *(Феняна ыталаса илет.)*

## 2 КАРТИНА.

*Çавăнтах, каçхине. Маюк, Тяттюк тата Пăнччук килеççĕ. Пурте капăр тумланнă.*

**МАЮК.** Ну, Пăнччук, ачу пултарать-тăк пултарать. Ун çинчен куç илми пăхса савăнса лартăм вĕт, иçмасса. Чăн-чăн артист тейĕн, иййа.
**ПĂНЧЧУК.** Хам та хĕпĕртерĕм. Руйунтан килнисем епле мухтарĕç тата. Киле илсе килсе кăштах хăна тумаллаччĕ пуль вĕсене, Тяттюк.
**ТЯТТЮК.** Тата мĕн! Кирук арăмĕнни пек ман кĕсъене мĕн, укçа кутăн кĕрет-и?
**МАЮК.** Малашне те çак çулпах кайсан пысăка каfive ывăлу.

**ТЯТТЮК**. Ыйткалама каять. Кооперативный техникумра вĕренет тесе пус çумне пус хушса, çимене перекетлесе, тăхăнмаллие хĕрхенсе икĕ çул нушалантăм. Вăл пур халăха култарма вĕреннĕ.
**ПĂНЧЧУК**. Ун пеккисем те кирлĕ. Курма пынă çынсем еплерех кăмăлпа клубран тухса кайрĕç. Маттур Шурик, пурте пултараймаç ун пек.
**ТЯТТЮК**. Ейкеленме ăна вĕренмесĕр те пулать.
**МАЮК.** Ахалех кулянатăн, Тяттюк, ачу паллă артист пулсан ху унпа мухтанса та пĕтерейменĕ-ха.
**ТЯТТЮК.** Маюк, шăл ерсе ан тăр-ха эс те пулин. Хăвăн хĕрне унта ярса вĕрентсе кăлармаллаччĕ.
**МАЮК.** Ман хĕр хула пурнăçне кăмăлламасть çав, çавна пулах вĕренме те каймарĕ.
**ПĂНЧЧУК.** Маюк, мĕн калаçан унпа. Ун пуçĕнче те пĕр шухăш çеç - укçа. Укçа пулсан никам та кирлĕ мар ăна. Укçаллă пулас тесен мана та сутать, ывăла та сутать, хăй те сутăнать. Ак çакăнта килсе кĕтĕр-ха пĕр-пĕр бизнесмен, тӳрех ун çине утланса ларать.
**ТЯТТЮК.** Тепĕр тесен мĕн пăхса тăмалли, ĕмĕр çук пурнăçпа пурăнса ирттермелле-и? Сана кĕтсе ларсан... Санран пулмарĕ, ывăла вара хам енне çавăратăпах, укçа тума вĕрентетĕпех. Кĕр атя пӳрте, çитĕ лăркаса. *(Пăнччук килне кĕрет.)*
**МАЮК.** Манăн та кĕрес пуль, кĕтӳрен юлăп тата. *(Кĕрсе каять.)*
**ТЯТТЮК** *(Пăнччука)* Ма кĕрсе кайрăн эс? Тух часрах.
**ПĂНЧЧУК.** Ху кĕр терĕн вĕт.
**ТЯТТЮК.** Эп Маюк кĕрсе кайтăр тесе çеç каларăм. Атту вăл ирччен те янраса тăма пултарать. Пыр, кĕлете кĕрсе икĕ мишук илсе тух.
**ПĂНЧЧУК.** Татах вăрра каясшăн-и? Каймастăп эпĕ тек ниçта та.
**ТЯТТЮК.** Шăпрах калаç, тăмсай. Мунча кăмаки ишĕле пуçланă, мĕнпе купалас тен? Килте пĕр кирпĕч çук. Кĕлет никĕсĕ те веç çĕрнĕ, кирпĕчрен тумалла. Кирук арăмĕ вара çĕнĕ лавкка тума темиçе машина кирпĕч кӳрсе тăкнă. Ун чухлĕ кирпĕч çинче кăшт чакнине никам та сисмест.
**ПĂНЧЧУК**. Илĕпĕр-ха эпир те, хĕле кĕриччен тен пире те укçа парĕç.
**ТЯТТЮК.** Укçалла ăна такам та илме пултарать, эс укçасăр тупса пăх.
**ПĂНЧЧУК.** Кункаçа мĕн те пулин вăрламасан чуну канмасть пуль сан.
**ТЯТТЮК.** Палкаса ан тăр, илсе тух часрах. Клуба пынă çынсем саланса пĕтрĕç пулмалла. Ĕç ăнсан пĕр черкке ярса парăп вара.
**ПĂНЧЧУК**. Эх, çакăнпа... *(Кĕме тăрать.)*
**ТЯТТЮК.** Чим, тăхта, мишукпа мĕн йăтни паллă, мăкăрăлса тăрать. Хулана каймалли пысăк сумкасене илсе тух. Эпир ăçтан килнине никам та тавçăраймĕ. Леш маскарад упăтисене те ил, кам та пулин курсан палласа ан илтĕр. Усси çавă пултăр хăть вĕсенчен. Ĕç укçи вырăнне тыттарчĕç сутăнман тавар. *(Пăнччук кĕрсе каять.)* Ик алла ик сумка тытсан. Пĕрне пилĕк кирпĕч, теприне пилĕк кирпĕч – вăл пулать вунă кирпĕч. Сана вунпиллĕкĕшпех йăттарсан пĕтĕмпе пулать çирĕм пиллĕк. Çĕр каçипе икĕ хут хутласан... Çук, икĕ хут хутланипе нумаях илсе килейместпĕр. Тăватă хут хутласан... 25 çумне хушас 25

пулать 50, унтан тата тепӗр 50. Ҫӗр кирпӗч пулчӗ те. Ыран тата ҫӗр кирпӗч илсе килсен, виҫмине тепӗр ҫӗр... Эрне ҫывӑрмасан пӗлетӗн-и мӗн чухлӗ  пулать, Пӑнччук.
**ПӐНЧУК** *(тухса).* Кирпӗч шутламалла пулать. Ме сумкусене, ме упӑтӳсене. Эпӗ ниҫта та каймастӑп. Черккӳ те кирлӗ мар, кирпӗччӳ те кирлӗ мар, ху та кирлӗ мар.
**ТЯТТЮК.** Мӗнле вӑл каймастӑн?! Эп сана Маюка ҫаратма хушмастӑп, ҫӗрме пуянсене. Ун пеккисене ҫаратсан та сӑвап кӑна пулать. Мӗн, хӑйсен вӑйӗпе пуйса кайрӗҫ тетӗн-и?
**ПӐНЧЧУК.** Аван мар, Тяттюк.
**ТЯТТЮК.** Мӗн аван мар?! Мӗн аван мар?! Ҫара кут ҫӳреме аван мар, урам варринче  чуптӑвӑнса тӑма аван мар, арӑм курман чухне ют хӗрарӑм патне йӑрккама аван мар – ак мӗн аван мар! Атя, те хуларан килетпӗр-ха эпир, те хӑнаран.
**ПӐНЧЧУК.** Кам та пулин курсан ялта ят каять вӗт.
**ТЯТТЮК.** Пирӗн мар, упӑтесен ячӗ каять. Тӑхӑн, конспираци.
**ПӐНЧЧУК.** Хӑратӑп эпӗ.
**ТЯТТЮК.** Маюкпа клуб тӑрӑх спектакльсем выляса ҫӳреме хӑрамастӑн, халь хӑратӑн иккен. Пымасан тек нихӑҫан та клуб енне ура ярса пуснӑ ан пултӑр.
**ПӐНЧЧУК.** Ах, ҫакӑнпа... *(Йӑпшӑнса каяҫҫӗ.)*

*Феня килет, ун хыҫҫӑн Шурик.*

**ШУРИК.** Феня! Феня, тӑхта!
**ФЕНЯ.** Яр мана, Шурик, тек ан ҫӳре ман хыҫран.
**ШУРИК.** Мӗн, сан патна каллех Вова килмелле-и?
**ФЕНЯ.** Никам та килмелле маар манн пата. Неушлӗ халь те ӑнланмастӑн? Вӑл мана мар, вӑл санӑн Нюркуна шыраса килнӗ.
**ШУРИК.** Ман Нюрка мар вӑл, хӑй ҫипҫӑнать мана юри йӗкӗлтесе.
**ФЕНЯ.** Йӗкӗлтени курӑнмарӗ-ха. Пӗрне пӗри ах тур епле савса кӑтартрӑр. Пӗтӗм халӑх умӗнче тата. Эп вара ӑна хӗрхенсе тӑратӑп.
**ШУРИК.** Вӑл вӑйӑ ҫеҫ-ҫке, конкурс. Эпӗ санах юрататӑп. Сцена ҫинче теприне каланӑ сӑмахсене ма ӑша илетӗн эсӗ?
**ФЕНЯ.** Вӑл конкурса эс тепринпе хутшӑннӑ пулсан тен эп... Эс юри унпа тухрӑн, эс юри ӑна чӗннӗ. Эп вара ӑна шеллесе тӑратӑп. Вӑл вара санпа савмалла вылять. Мӗнлерех ӑшшӑн пӑхаҫҫӗ хӑйсем пӗр-пӗрин ҫине, кӑвакарчӑнсем тейӗн. Лешин те куҫӗсем еплерех ҫиҫеҫҫӗ. Калан сӑмахӗсене те чун-чӗререн калаҫҫӗ.
**ШУРИК.** Эс конкурса хутшӑннӑ пулсан ҫав сӑмахсене пӗтӗмпех эпӗ сана каланӑ пулӑттӑм, санах чуптунӑ пулӑттӑм. Ху килӗшмерӗн вӗт. Нюрка вара сӑмахсӑрах килӗшрӗ.
**ФЕНЯ.** Паллах, ма килӗшмӗ ҫавӑн пек каччӑ юратса пӑрахнӑ пулсан.
**ШУРИК.** Мӗн тумаллаччӗ-ха ман, ӗҫсӗр юлмаллаччӗ-и? Мана малтанах каларӗҫ: мӗн те пулин ирттерсе кӑтарт, вара пуҫӗпех ӗҫе илетпӗр терӗҫ. Малтан испытательный срокпа кӑна терӗҫ.  Эпир те ӗненмелле выляман пулсан мӗн пулса тухатчӗ ку конкурсран, нимӗн

те. Хăвах куртăн-çке, ытти мăшăрсем кăнттам, вăтанаççĕ, чĕнме хăраççĕ. Нюрка вара...
**ФЕНЯ.** Вĕсем пĕр-пĕрне сирĕн пек савмаççĕ.
**ШУРИК.** Эпир те савса мар, сценари тăрăх çеç. Эпĕ сана маншăн савăнатăн пуль тенĕччĕ.
**ФЕНЯ**. Саншăн тен савăнатăп та, анчах та Нюркашăн...
**ШУРИК.** Ман-ха ун çинчен, Феня, пирĕштийĕм, çут çăлтăрăм, ытарайми телейĕм...
**ФЕНЯ.** Кай, Шурик, теприне каланă сăмахсене мана каласа ан тăр.
**ШУРИК.** Эпĕ вĕсене сан çинчен шутласа сценарие кĕртрĕм.
**ФЕНЯ.** Клубра капла та пурте калаçаççĕ кусем пĕр-пĕрне чăнласах юратаççĕ иккен тесе, иккĕшĕн пĕрлешмелле кăна ĕнтĕ тесе. Пĕрлешĕр те пурăнăр эппин. Кураймастăп эпĕ сире иксĕре те! *(Йĕрсе кĕрсе кайма тăрать.)*
**ШУРИК**. Феня!
**МАЮК** *(тухать).* Эсир-çке. Хытах шавланипе Феняна пĕркунхи пек ял пуçтахĕсем тапăнман-ши терĕм те.
**ШУРИК**. Камсем? Феня, эс мана кун пирки каламан. Эппин сан чăн та такам пур.
**ФЕНЯ.** Анне, кам хушрĕ-ха сана кунта тухма? Кам чĕлхӳнтен туртать сана? *(Пӳртне кĕрсе каять.)*
**МАЮК.** Ак, тамашша, хăйне хĕрхенсе тухрăм та айăплă пулса тăтăм-и тата? Эх, ку хĕрупраçпа...
**ШУРИК.** Маюк аппа, Феняна тапăнни тĕрĕсех-и вăл?
**МАЮК.** Тапăнма тапăнман пуль те. Вара ман хĕрĕ ытла та кăмăлласкер пулнипе пуль каччăсем тĕл пулсан çулăхаççĕ тет те, утăм утма та памаççĕ тет. Ярса тытаççĕ тет те...
**ШУРИК**. Ярса тытаççĕ?
**МАЮК.** Вара çамрăк чухне пурте çавах пулнă та-ха ĕнтĕ. Кунта ним пăсăкли те çук та-ха ĕнтĕ. Вара мĕн пулчĕ-ха капла? Иксĕр халь мĕн-им-ха?
**ШУРИК.** Кунта эпĕ нимĕн те мĕн мар-ха. Кунта урăххисем мĕн пулас-ха. *(Каять.)*
**МАЮК.** Кай, кункаçа миçе тĕслĕ улшăнмасть-ши сирĕн кăмăл.
**ФЕНЯ** *(тухать).* Шурик!
**МАЮК.** Тем пулса иртет сирĕнпе. Паçăр çеç лайăхчĕ-çке.
**ФЕНЯ.** Юратмасть вăл мана, вăл урăххине юратать. Эп вара шантăм, кĕтрĕм, халь вара... *(Юрлать. Кайран хăраса.)* Ай! Анне!!!
**МАЮК**. Мĕн пулчĕ?! Каллех пуçтахсем-и?!
**ФЕНЯ.** Унта такам пур.
**МАЮК**. Эп вĕсене çиччас!.. *(Патак илсе такама хĕнеме пуçлать, Тяттюкпа Пăнччук çухăрса тухаççĕ.)* Ах, эсир-çке. Çĕр варринче мĕн тăватăр вара унта?
**ТЯТТЮК.** Эх, эсремет Маюкĕ, ма çывăрмастăн эсĕ çак?
**МАЮК.** Эсир вара ма çывăрмастăр?
**ПĂНЧЧУК.** Эпир мĕне кайса мĕнсене мĕн туса килер терĕмĕр те...
**МАЮК**. Камсене?

**ТЯТТЮК.** Ах, çак ăнлантарса парасса кĕтсе... Ара руйунтан ывăл ĕçне курма килнисене кайса хăналаса килер-ха терĕмĕр. Пирĕн Шурик пеккисене тринкки-тринкки сикме вĕрентнипе ĕшеннĕрен-и шутсăр выçă куçлă пăхса ларчĕç те.
**МАЮК.** Ма хăналамасăрах килетĕр вара?
**ПĂНЧЧУК.** Кайса ĕлкĕрнĕ, хăяматсем. Машини хыçĕнчен чупрăм-чупрăм, çитеймерĕм. Халь ак каялла вăйса килетпĕр.
**ТЯТТЮК.** Юрĕ, перекет сыхă юлать. Вĕсене хăналамасан та ывăл авланнă чухне енчĕк кăна мар, нӳхреп те çап-çутах çуталĕ-ха.
**МАЮК.** Авлантарасах терĕр-им-ха апла?
**ТЯТТЮК.** Мĕн кĕтмелли пур? Халь авлантарса юлмасан пĕри çулăхĕ, тепри çавăрса илме тăрăшĕ. Хальхи хĕрсем каччăсене ирĕксĕр авлантрма маçтăр вĕт.
**МАЮК.** Паллах вăхăтра авлантарнине нимĕн те çитмест.
**ПĂНЧЧУК.** Çитмест, çитмест... Çитменнине тата пĕр-пĕрне ачаранах пĕлеççĕ, юратни те сисĕнет. Феня пек хĕре кин туса кĕресси пирĕншĕн чыс кăна.
**ТЯТТЮК.** Кама?! Эс, Пăнччук, кунта мĕн пĕтлетсе тăран? Мĕнле Феня? Кам ăна илесшĕн-ха кунта? Маюк тарăхтарни çитмест, тата ун хĕрне кин тумалла-и-ха тата?
**МАЮК.** Чим-ха, Тяттюк, эс пире çав тери тиркесе ан тăр-ха кунта. Феняна тиркеме вăл юхха хĕр мар пуль.
**ТЯТТЮК.** Тата кам пултăр? Хам куçпа хам куртăм ак çакăнта кăнтăр варринче ывăла çавăрса тытнă та, тутинчен лачлаттарать кăна вĕт. Тьфу!
**МАЮК.** И-и-и, шапа çăвар, лаххан хырăм, кĕвенте ура, кăвакал куç. Ху мĕнлине мантăн-и? Шăл ыратать тесе Захар Иванч патне чупнине мантăн-и?
**ТЯТТЮК.** Юхха вăл сан, юхха. Эс те юхха, вăл та юхха.
**МАЮК.** Эс апла пулсан тяхха.
**ТЯТТЮК.** Эп чыслă çын. Мана чĕнме те Татьяна Ивановна тесе кăна чĕнеççĕ.
**МАЮК.** Çапла пулмасăр, вăрă тесе чĕнеççĕ.
**ТЯТТЮК.** Эс тăрă.
**МАЮК.** Эс çурмаккай.
**ТЯТТЮК.** Эс тăрнаккай.
**МАЮК.** Эс чанкăлти.
**ТЯТТЮК.** Эс янкăлти.
**МАЮК.** Эс тăнкки.
**ТЯТТЮК.** Эс ханша пăтти.
**ФЕНЯ** *(тухса).* Анне, мĕн çапăçса тăран эс çавăнпа? Кĕр пӳрте.
**МАЮК.** Тяттюк айне пулса юлатăп-и? Кур-ха ăна халăх юнне ĕме-ĕме анкрти пек çăварĕпе кушак пуç пек кăлпассийе мĕтĕре-мĕтĕре самăрăлса кайрĕ те, халь çавăнтан хама хăрттаратăп-и?
**ТЯТТЮК.** Çавă кирлĕ те, вăрланă – лайăх пулнă.
**МАЮК.** Текех вăрлаймăн. Халь сан лавкку та çара, эс ху та çара.

**ТЯТТЮК**. Эпĕ-и? Эпĕ çара-и? *(Сумкинчен кирпĕч илсе.)* Ак яратăп кирпĕчпе пуçунтан!
**ПĂНЧЧУК** *(Тяттюк аллинчи кирпĕчче туртса илсе).* Тяттюк! Кирпĕчче ма кăтартан?
**ТЯТТЮК.** Пĕлтĕр, куртăр, хăрамастăп эп унран. Сана та çарататăп, теприне те çарататăп, пурне те çарататăп, анчах çара пулмастăп.
**МАЮК.** Çарат, çарат, шалчу тулĕ-ха санăн та. Вара укçа мар, кирпĕч шутлама тытăнăн.
**ШУРИК** *(килет).* Ма çывăрмастăр эсир, мансăрах туй тăватăр-и?
**ТЯТТЮК.** Мĕнле туй? Пулмасть нимĕнле туй та.
**ШУРИК.** Пулать. Феня, кил-ха çума. Çитет пире пĕрне-пĕри ӳпкелесе те кĕвĕçсе. *(Феняна çавăтса пырать.)* Хăть те мĕнле япалана та вăхăтра тумалла, кая юлсан кайу шăтать. Сана эпĕ текех хамран пурĕпĕр вĕçертместĕп. *(Тяттюкпа Пăнччука.)* Халь пеххиллĕр пире. Эп авланатăп, Феняна качча илетĕп.
**ТЯТТЮК** *(весене уйăрса).* Авлантармастăп, пеххиллеместĕп.
**ШУРИК.** Атте, эс те пеххиллеместĕн-и?
**ПĂНЧЧУК.** Ма? Эп хаваспах...
**ТЯТТЮК** *(Пăнччука чăмăр кăтартса).* Ак çакна куратăн-и?
**ПĂНЧЧУК** *(Тяттюка чышса ярать, леш çĕре кайса ӳкет.)* Сана пăхса тăрсан... Ачасем, мĕнле калас та, сирĕн телей малалла, пирĕн вара каялла. Ип пултăр, сип пултăр, пуç тӳпинчен телей пултăр, куракансем курса тăччĕр, кураймансем йĕрсе ларччĕр. Пеххил сире! Ну, çĕнĕ çынсем, атьăр пӳрте.
**ТЯТТЮК** *(урлă тăрса).* Кĕртместĕп, ура та ярса пустармастăп хам киле.
**ШУРИК**. Кĕртместĕн? Эппин ан кĕрт. Юратсан ӳплере те пурăнма пулать.
**ТЯТТЮК.** Пурăнса пăх-ха, кайран еплерех юрлăн. Шăнса хытсан...
**ШУРИК.** Шăнса хытсан та кĕрт тесе каламастăп.
**ТЯТТЮК.** Хырăму выçсан...
**ШУРИК**. Санран пĕр чĕлĕ çăкăр та ыйтмастăп.
**ТЯТТЮК.** Хăвах, анне, эс тĕрĕсех вăрçнă иккен тесе килĕн-ха.
**ШУРИК.** Сан патна киличчен куç курми тухса каятăп.
**ТЯТТЮК.** Мĕн? Мĕн терĕн? Ывăлăм, пĕртен-пĕр ывăлăм, мĕн калаçан эс? Камшăн нушаланнă вара эпир, камшăн çынран кая мар пурнасчĕ тесе çĕр çывăрмасăр тăрăшнă? Камшăн çурт лартрăмăр вара эпир? Ах, Шурик... Ах, чĕрем... *(Лаштăрах ларать.)*
**ШУРИК.** Анне... Анне, мĕн пулчĕ?
**МАЮК.** Ах, Тяттюк, чĕлхӳне чарайманнипех вилсе выртатăн ак.
**ШУРИК.** Анне, каçар, эп юри кăна каларăм. Эп юрататăп сана, веçех эс хушнă пек тăватăп, эс сывал çеç. Феня, каçар та....
**ФЕНЯ.** Каçаратăп.
**ШУРИК.** Эп мĕн тесшĕнччĕ...
**ФЕНЯ.** Çук, нимĕн те ан кала, эп пĕтĕмпех ăнлантăм.
**ШУРИК**. Эс темле пăхан...
**ФЕНЯ.** Артист эс, Шурик, акă кам.

*Нюра килет, вăл аллине гитара тытнă.*

**НЮРА.** Ырă каç тепре. Шурик, эс гитаруна мантарса хăварнă. Çухаличчен килсе парам-ха терĕм. Феня, ахалех конкурса хутшăнмарăн. Шурик мана та мĕнлерех сăмахсем каларĕ те, санпа пĕрле пулнă пулсан...
**ФЕНЯ.** Çук, вăл мана нимĕн те каламан пулĕччĕ.
**ШУРИК.** Эп пĕтĕмпех сценари тăрăх каланă.
**НЮРА.** Сценари тăрăх пурне те калаймастăн çав.
**ШУРИК.** Эп вара сценаринче çырнисĕр пуçне хамран илсе нимĕн те каламастăп, нимĕн те тумастăп.
**ФЕНЯ.** Çапла, эпĕ те... Манăн ак халĕ сценари тăрăх кĕрсе каймалла. *(Кĕрсе каять.)*
**ШУРИК.** Феня!
**НЮРА.** Мана çиленнĕ пулмалла.
**ТЯТТЮК.** Çиленин! Пуç çапмалла мар-и тата? Тупăннă кунта.
**МАЮК.** Чим-ха, пуç та çапăн-ха. Ĕмĕр тăрăшшĕ вăрăм вăл. Ун чухне эпир сан енне кутăн çаврăнса тăрăпăр. *(Кĕрсе каять.)*
**ТЯТТЮК.** Пăнччук, эп йăнăшнă пулас.
**ПĂНЧЧУК.** Паллах йăнăшнă. Феня пек лайăх хĕр пирĕн тĕле тек пулас çук.
**ТЯТТЮК.** Эп ун пирки мар. Эп Кирку арăмĕ пирки. Сцена çинче Шурик ун хĕрĕпе мĕн турĕ вĕт-ха. «Юратап» та «юратап» терĕç пĕр-пĕрне. Эппин шăпах... Лавкки те пур, укçи те пур, машини те пур...
**ПĂНЧЧУК.** Хĕрĕн упăшки те пур.
**ТЯТТЮК.** Качча кайман тет вăл, юри калаççĕ тет. Ку бизнес вĕт, ку мĕнле чаплă расчет. Пĕлетĕн-и ăна качча илсе эпир камсем пулатпăр?
**ПĂНЧЧУК.** Тункатасем, анра сурăхсем, упăтесем...
**ШУРИК.** Анне, сан клубра спектакль кăна вылямалла*. (Кĕрсе кайма тăрать.)*
**ТЯТТЮК** *(ун çулне пӳлсе*). Чим, эс тата ăçталла?
**ШУРИК.** Киле.
**ТЯТТЮК.** Сан килӳ халь*... (Урăх сасăпа.)* Калаç унпа, ухмах, хĕр хăй сан патна килнĕ.
**ШУРИК.** Анне, сана эп урамра хĕрпе калаçса тăни килĕшмесчĕ пулас.
**ТЯТТЮК.** Вăл кăнтăрла пулнă, халь каçхине*. (Урăх сасăпа.)* Ах, мансах кайнă, вара эпĕ паçăр плита çине сĕт лартса янăччĕ-çке, вĕресе тăкăнать пуль. Пăнччук, атя часрах. *(Сумкисене йăтса кĕрсе каяççĕ.)*
**ШУРИК.** Камит ăсти! *(Кĕме тăрать.)*
**НЮРА.** Интереслĕ сан аннӳ.
**ШУРИК .** Çапла, интерес кăтартма маçтăр. *(Кĕме тăрать.)*
**НЮРА.** Шурик, эс мана гитарапа выляма вĕрентеп тенĕччĕ.
**ШУРИК.** Урăх чух. Халь эп...
**НЮРА.** Мĕн пулнă сана? Эс кулăшла тем.

**ШУРИК.** Мĕн кулăшли унта, ман йĕрес килет.
**НЮРА.** Мĕншĕн?
**ШУРИК.** Мĕншĕн-мĕншĕн... Ăнланмаççĕ çынсем сцена мĕн иккенне, акă мĕншĕн. Çавна пулах мана та ăнланмаççĕ.
**НЮРА.** Ăнланман çынсемшĕн ма тарăхан вара, сур вĕсем çине. Эпĕ сана ак питĕ лайăх ăнланатăп. Эсĕ те мана ăнланатăн пуль тетĕп.
**ШУРИК.** Сире, хĕрсене, ăнланса пĕтерейместĕн. Май тăк май эсир, апрель тăк апрель. Халь ман хăть ялтан тухса кай.
**НЮРА.** Ан кай, эс пирĕн пата куç. Кĕçех эпир лавкка çумне тепĕр зал купалатпăр, унта каçхи клуб пулать. Сан валли юратнă ĕç пулать.
**ШУРИК.** Стриптиз кăтартмалли ĕç-и? Çук вара, ăна хăвах кăтарт, эс хулара вăл тĕлĕшпе лайăх опыт пухнă теç. Манăн телей вара урăххинче. Санра мар, урăххинче. Юратмастăп эп сана, юратман та. Кай хăвăн мерседесли патне. Мана вара хăвар. Хăвар! Хăвар! *(Кĕрсе каять.)*
**МАЮК** *(тухать).* Кай ĕнтĕ, çакăн пек пулса тухĕ тесе кам шутланă. Кĕрсе кайрĕ-им-ха? Феняна ниепле те лăплантараймастăп, уласах йĕрет. Ку Тяттюка пула... Ывăлĕ те тата... Кай ĕнтĕ, пулать вĕт çын.
**НЮРА.** Вĕрентсе илмелле-ха вĕсене амăшĕпе иккĕшне те.
**МАЮК.** Вĕрентекен çук çав. Алла илекенни пулсан пĕлĕччĕç те-ха çынна тиркеме.
**НЮРА.** Маюк аппа, ман халь хамăн хĕр чысĕ пирки пит шутламалли çук. Тата çак Шурик мемме пулнипех йăнăш çул çине тăтăм. Халь ак пĕчĕккине кĕтетĕп. Ашшĕ пулмаллискерĕ çураттарасшăн мар ăна, эп вара.... Атя пурне те ырăна лартас тесе пĕр мыскара туса илетпĕр.
**МАЮК.** Мыскара?
**НЮРА.** Кăшт выляса илетпĕр спектакльти пек. Эс мана пулăшсан, ман шухăш ăнмаллах. *(Маюка хăлхинчен пăшăлтатса калать.)* Тулькка никама та кун пирки ан кала, Феняна та.
**МАЮК.** Сан шухăшу Тяттюка ăс кĕртес пулсан, веçех эс хушнă пек тăватăп.
*(Ламбада кĕввипе юрласа каяççĕ.)*
Ну, Тяттюк, мăшкăлшăнах тавăратпăр-ха сана
Вĕри çатма çинче ай-яй ташлаттарăпăр сана.
Ун пеккисене пултаратпăр эпир,
Ан кулян, пĕртте, ан кулян.
Сире çемйипе тавăрма меслетне
Меслетне, ах, тупар. Ах, тупар.
Атя халĕ каятпăр та кайран
Килетпĕр тавăрма, тавăрма.

*Вова килет, Феня килĕнчен тухать.*

**ВОВА.** Салам, мадам.
**ФЕНЯ.** Ой, эс кампа калаçан, кунта мансăр пуçне никам та çук-çке.
**ВОВА.** Санпа, санпа кăна, мадам, эс çĕр çинче пĕрре, сана çитекенни те никам та çук.

**ФЕНЯ.** Ай-уй, ҫакӑн пекех чипер калаҫма ӑҫтан вӗреннӗ вара эсӗ, Вовчик, интернетран-и?
**ВОВА.** Интернетран мар, сана юратса пӑрахрӑм пулмалла.
**ФЕНЯ**. Кай, пӗрре те улшӑнман эс, ҫав-ҫавах сӑмахупа ҫил хӑвалан.
**ВОВА.** Ҫил мар, эп сана хӑвалатӑп. Ку таранччен ахалех Нюрапа тӑтраннӑ иккен эп, ак тӳрех сана савмалла пулнӑ. Ну, патша майри пулас килет-и?
**ФЕНЯ**. Патши вара кам-ши тата, эсӗ мар-и, Вовчик?
**ВОВА.** Мӗн, ман ҫине пӑхсан туйӑнмасть-и?
**ФЕНЯ.** Ҫук, туйӑнмасть, ытла шӳтлеме юратан.
**ВОВА**. Эп шӳтлеместӗп, чӑнне калатӑп. Ма мухтанмалла мар тет ман? Ак пӑх, мӗнрен эп патшаран кая? Юратнӑ ӗҫ пур, хамӑн ҫурт пур, машина-иномарка...
**ФЕНЯ.** Пур пуль, пур пуль. Арӑму та пур пуль, ачусем те пур пуль.
**ВОВА.** Ҫуккӑ ҫав – ку ман ҫитменлӗх. Ҫуккине пур тума килтӗм те яла. Ну, патша арӑмӗ пулатӑн-и ?
**ФЕНЯ.** Ҫук пуль ӗнтӗ, пулмӗ ӗнтӗ
Патша арӑм пуласси.
Маншӑн пулмӗ, никам пулмӗ
Савнӑ туса ҫитесси.
**ВОВА.** Чипер хӗрсем пит нумай,
Сана пурпӗр ҫитес ҫук.
Ӗмӗтре эсӗ ман халь,
Тек пӗри те кирли ҫук.
**ФЕНЯ.** Вовчик, эс мана Нюркапа пӑтраштарнӑ.
**ВОВА.** Вовчик тесе ан чӗн-ха мана. Вовчик мар эпӗ, Владимир.
**ФЕНЯ.** Вара хӑть Вовчик, хӑть Владимир, ҫавах мар-и?
**ВОВА**. Ҫук, ҫавах мар. Уйрӑмлӑх *(Хӑлаҫланса.)* ак ҫакӑн пысӑкӑшех. Вовчик вӑл таҫта хыҫалта юлнӑ, ачалӑхра. Владимир вара ав лере, хӗвел ҫинче.
**ФЕНЯ.** Хӗвелӗ тем халь ҫӳлте мар ҫав, Хӑрахкасси хыҫнех анса ларнӑ.
**ВОВА.** Ну, Феня, ӑҫтан пулнӑ эс ҫакӑн пек, катан-катан пурӗпӗр шӑл витмест. Асту, тӗшши хуппи ӑшӗнчех кӑвакарса ан кайтӑр.
**ФЕНЯ.** Кӑвакармасть, ан хӑра, тутлӑланса кӑна ҫитет. Анчах та сана вали мар, теприн вали.
**ВОВА.** Кам вара вӑл, мӗне кура ӑна ҫавӑн пек чыс? Вӑл мӗн, манран та крутойрах ӗҫ ҫавӑрса янӑ-и, укҫи манӑннинчен те нумайрах-и?
**ФЕНЯ**. Уйрӑмлӑхӗ пысӑк, Вовчик.
**ВОВА**. Эп Вовчик мар терӗм вӗт-ха.
**ФЕНЯ.** Хӑть Вовчик, хӑть Владимир – пӗр шуйттан.
**ВОВА**. Шуйттан та мар эп. Эп...
**ФЕНЯ**. Пӗлетӗп, эс хӗрсене йӗртекен ҫын. Вочикӗ те хӗрсене йӗртетчӗ, Владимирӗ те хӗрсене йӗртет.
**ВОВА**. Йӗрекенни кам, Нюра-и? Йӗрет сана, пӗтӗм халӑх умӗнче Шурике мӗнле йышши юратса кӑтартрӗ-ха. Вӑл пулмасассӑн теприне тупатӑп. Кам вара вӑл ҫаплах?

**ФЕНЯ.** Хĕр. Арăм пулма пиçсе çитнĕ хĕр.
**ВОВА.** Пиçсе çитнисем вĕсем туллиех, тивĕçлисем сахалтарах. Пулсан та хăй патне яхăнне те ямасть.
**ФЕНЯ**. Чунлă çынна никам та кай темест, чунсăррипе вара юнашар та тăрас килмест.
**ВОВА**. Хĕр мар эс, Феня, ватă карчăк сăмахĕсене калан. Асту, карчăк пулса ларатăн акă çирĕмрех. Вăт хĕр те эсĕ ăна. Пĕтĕм пуçа пăтратса ячĕ. Мĕн тумалла тет халĕ манăн санăн шутупа? Нюркана çакăн хыççăн та пуç кайса çапмалла тет-и? Э, çук вара, тĕнчере хĕр пĕтмен-ха. Так, шутла-шутла, ухмах пуç, пулăн вара ăслă пуç. Все, çакланчĕ пĕр ăслă шухăш. *(Юрласа.)*
Ялăм-ялăм, тăван ялăм,
Илтнĕ-и эс, пĕлнĕ-и?
Пур çĕр çинче кĕнчеле,
Пĕрре мар, пин те пĕрре.
Хĕрсем пулаç аплисем,
**ФЕНЯ.** Яшсем пулаç каплисем.
**ВОВА.** Сӳтĕлеç те çыхăнаç.
**ФЕНЯ**. Сехрене те хăпартаç
**ВОВА**. Ах, мĕн тăвас, мĕн тăвас?
**ФЕНЯ**. Чĕре хушнине тăвас.
**ВОВА**. Чĕре хушни, тур пӳрни
Çумĕнче халĕ тепри.
**ФЕНЯ**. Пĕрлешчĕрех тен пулсан
Икĕ чĕре пĕр çĕре,
**ВОВА**. Ниме пăхса тăмасăр
Тĕнчене çавăрмалла.
**ФЕНЯ.** Тĕнчи çаврăнсан, хамăр та çаврăнса каятпăр-çке. Кутăн-пуçăн пăтрансан вĕçĕ хĕрри пулĕ-ши?
**ВОВА.** Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕм пурнăçлантăрах тесен тем те чăтса ирттерем, такам та пулса тăрам. *(Кĕсъинчен журнал кăларса парать.)* Тыт-ха çакна, вунвиççĕмĕш страницана уç.
**ФЕНЯ.** Мĕнле журнал вара ку?
**ВОВА.** Паллан пуль теп çав хĕре.
**ФЕНЯ.** Ах, эс паккăç, намăссăр, мĕн хытланан эс, пӳтсĕр. Юрататăп тен ăна, ху вара хĕрĕн вăрттăн вырăнне пĕтĕм çынна кăтартан. Ак сана! Ак сана! *(Вова хăваласа тухса каять.)*

*Шурик килĕнчен сирпĕнсе тухать, тепĕр енчен Нюра килет..*

**ШУРИК.** Ах, çак аннене, пуçа çиет иккен.
**НЮРА.** Аннӳ çисе яриччен кил-ха хам çисе ярам. *(Шурике чуптума тытăнать.)*
**ШУРИК** *(хăтăлса).* Кун пек юрамасть. Кун пек правилапа мар. Правилапа каччăн хăйĕн чуптумалла.
**НЮРА.** Сан правилуна кĕтсе ларсан. Конкурсра та пĕрре те чуптумарăн та. Те чуптума пĕлетĕн-ха эс.

**ШУРИК.** Эпĕ-и? Эпĕ тем тума та пĕлетĕп. Анчах та тумастăп.
**НЮРА.** Мĕншĕн? Эсĕ каччă вĕт.
**ШУРИК.** Хĕр мар ĕнтĕ.
**НЮРА** *(юри йĕнĕ пек).* Эпĕ вара хĕр. Каччă  пулсан ăшăт-ха мана, сулхăн пула пуçларĕ.
**ШУРИК.** Шăнтăн пулсан килне кай.
**НЮРА.** Ман халех киле каяс килмест çав, каччăпа чухне каçхи урампа киленсе çӳрес килет.
**ШУРИК.** Каччу ăçта вара хăвăн?
**НЮРА.** Эсĕ каччă мар-и вара?
**ШУРИК.** Эпĕ каччă та-ха, эпĕ мĕн тесе.
**НЮРА.** Эсĕ мĕн ан те, эсĕ мĕн ту.
**ШУРИК.** Мĕн «мĕн тăвас»?
**НЮРА.** Каччăпа хĕр мĕн тăваççĕ, çавна мĕн ту.
**ШУРИК.** Э, çук, халь конкурс пĕтрĕ ĕнтĕ. Сцена çинче капла та эс сценаринче çуккине те кăтартса патăн. Чисти хамăн пит хĕрелсе кайрĕ.
**НЮРА.** Тиркешсе ларать-ха тата. Сан мана çавăн пек савса кăтартнăшăн алă çинче йăтса çӳремелле. Эс вара спасибо каласа хăна тума та пĕлмерĕн.
**ШУРИК.** Мĕнле хăна тумарăм? Чей ĕçтертĕм, торт çитертĕм...
**НЮРА.** Юрĕ, санран пурпĕр кĕтсе илсе пулмасть. *(Сумкинчен коньяк кĕленчи кăларать, черкке, лимон татăкĕсем, ун çине шурă япала сапать.)*
**ШУРИК.** Нюрка, эс мĕн тăван?
**НЮРА.** Мĕн-мĕн... Йӳççине пылаклатап.
**ШУРИК.** Эп эрех ĕçместĕп. Ăна ĕçсен эпĕ тусса каятăп.
**НЮРА.** Мана эсĕ тусса кайни кирлĕ те. Сценарипе кăна савакансене юратмастăп эпĕ. Ĕç.
**ШУРИК.** Çук, Нюрка, каçар та...
**НЮРА** *(хистесех).* Ĕç теççĕ сана! Пĕрре те арçын пек мар. Атту тек нихăçан та конкурссене хутшăнмап.  *(Çăварĕнчен ирĕксĕр тенĕ пек ярать.)*
**ШУРИК.** Çыртмалли, çыртмалли пар-ха.
**НЮРА** *(лимон татăкĕ парать).*  Ме çырт. *(Хăй валли ярать.)* Ну, тав сана конкурса чĕннĕшĕн, хутшăнтарнăшăн, савса кăтартнăшăн. *(Ĕçет.)*
**ШУРИК.** Хăвна тавах итленĕшĕн. *(Лимон татăкĕ парать.)* Ме çырт.
**НЮРА.** Эпĕ пĕр черкке ĕçнипех çыртмастăп. *(Татах тултарать.)* Эсĕ те малашне мана итле çав. Тыт.
**ШУРИК.** Татах-и?
**НЮРА.** Санăн икĕ куç пуль. Пĕри чалăш пăхсан, тепри тӳрĕ пăхни килĕшмест.
**ШУРИК.** Эпĕ пĕр черккепех...
**НЮРА.** Шурик, хăвна хĕр пек ӳкĕтлеттерсе ан тăр-ха.
**ШУРИК.** Ман ĕçкĕ лайăх мар.

**НЮРА.** Ман хамăн та путлĕ мар. Ĕç, атту сцена çинче туманнисене веçех туса кăтартап.
**ШУРИК.** Эс унта мана капла та кăтăкларăн-ха. Каламалли сăмахсене те манса кайрăм.
**НЮРА.** Сăмахне нумай каламаç ăна, ĕçне тăваç. Ĕç!
**ШУРИК** *(ирĕксĕр ĕçет).* Çыртмалли, çыртмалли*... (Лимон хыпать.)*
**НЮРА** *(тепĕр черкке тултарать).* Ну, сцена çинче пĕр-пĕрне савни пурнăçа кĕтĕр тесе*. (Ĕçет те татах тултарать.)*
**ШУРИК** *(анаслаcа).*Эп сцена çинче юрим-юрим çеç саврăм.
**НЮРА.** Ак çакна вара юрим-юрим мар, чăнласах ĕçсе ям. Ятăн халь.
**ШУРИК.** Эпĕ тек ĕçейместĕп.
**НЮРА.** Тур калашле виççĕ, теççĕ.
**ШУРИК.** Фу, тем çывăрас килсе кайрĕ. *(Нюра  Шурике çупăрлать.)* Ан кăтăкла-ха, Нюрка.
**НЮРА.** Коньяк юн патне çитсен кăтăкламасăр тăраймастăн çав. Ĕç часрах. *(Шурик ĕçет.)* Ме çыртса яр веçех. *(Лимон татăкĕсене çитерет.)*
**ШУРИК.** Мĕнле коньяк пулчĕ ку? Куç хăйне хăй хупăнать. *(Çывăрса каять.)*
**НЮРА** *(хăй тĕллĕн).* Тинех эмел хăйĕн ĕçне пуçларĕ иккен. Кай, ним тума пултарайман арçынсене юратмастăп та юратмастăп. Ну, эпир шутласа тупман, пиртен йăла тухман. Мĕн пулать те мĕн килет. *(Ун-кун пăхса илет те хăйĕн блузкин, Шурикĕн кĕпипе шăлаварĕн тӳммисене вĕçертет. Йĕме-кăшкăрма пуçлать, Тяттюксемпе Маюксен алăкĕсене пырса шаккать, Шурике силле-силле вăратать. Маюк тухать.)*
**МАЮК.** Ĕç тухрĕ-и?
**НЮРА.** Тухрĕ.
**МАЮК.** Маххă ан пар вара.

*Килĕнчен Тяттюкпа Пăнччук тухаççĕ.*

**ТЯТТЮК.** Кам унта?
**ПĂНЧЧУК.** Мĕн пулнă?
**НЮРА.** Мăшкăлларĕ. Эрех ĕçсе лартрĕ те пусса антарса мăшкăлларĕ. И-и-и... *(Уласа йĕрсе ярать.)*
**МАЮК** *(Шурике пырса силлет, леш вăранать).* Ах, аскăнчăк, пăх-ха ăна мĕн хăтланать. Ман хĕр хыççăн чупрĕ-чупрĕ те, хăй теприне... Ах, паккăç...
**ШУРИК.** Эп никама та нимĕн те туман.
**НЮРА.** Мĕнле туман? Малтан качча илеп тесе илĕртрĕ-илĕртрĕ те, кайран...
**ПĂНЧЧУК.** Ах, намăссăр, эс çапла-и-ха? Эп сана çиччас чĕн пиçиххипе...
**ТЯТТЮК.** Ним намăсĕ те çук, пусмăрланă – лайăх пулнă. Нюрка, ним чухлĕ те ан кулян. Эс шăп та лăп Шурик арăмĕ пулмалли хĕр. Атя пӳрте кĕретпĕр те пиртен пеххил илсе...

**ШУРИК.** Анне, ан пеххилле, вăл юри мана çавăрса илес тесе эрех ĕçтерчĕ. Пĕл çакна: эп сана юратмастăп, юратман та. Эп Феняна кăна юрататăп. Феня, чунăм... *(Феня килне кĕрсе каять.)* Феня!
**МАЮК.** Феня, хĕрĕм, чим-ха, эс тĕрĕс ăнлан-ха... Кунта мĕн-ха... Ах, мĕн амакĕ пулса тухĕ-ши? *(Вăрттăн.)* Нюрка, мĕн тăвар-ха?
**НЮРА.** Туй. Халех, çак самантранах. Унсăрăн эпĕ сана мăшкăлларĕ тесе тĕрмене хуптаратăп.
**ПĂНЧЧУК.** Тĕрмене?
**НЮРА.** Çиййĕнчен тата укçа тӳлеттеретĕп целый миллион...
**ТЯТТЮК.** Туй тăватпăр, туй. Качча илетпĕр сана, ан хуйхăр. Ывăлăм...
**ШУРИК.** Эп ăна качча илместĕп.
**ТЯТТЮК.** Илместĕп... Илсе панă чухне мĕнле йышши илĕн-ха. Эсир, арçынсем, хăвăр ирĕкпе авланасса кĕтсе ларнă пулсан, ху та паян кунччен те çуралман пулăттăн, аçу хăраххи. Тăр арăму çумне.
**ФЕНЯ.** Ан тăр, Шурик. Пĕтĕмпех ăнлантăм эпĕ сана,Нюрка, нимĕн те юри хăтланмастăн иккен эсĕ. Шурике вĕрентсе илетĕп тен, ху вара ăна ирĕксĕр качча килетĕн. Ăçта пулнă вăл хĕр каччăна пусмăрлани?
**ШУРИК.** Ниçта та пулман çав. Феня, хăтар-ха мана унран.
**НЮРА.** Феня, ан чăрмантар, кайран хăвах тав тăвăн.
**ФЕНЯ.** Иксĕр пĕрлешнĕ хыççăн-и? Эс качча кайма пит юрататăн пулмалла. Ку сан пĕрремĕш те иккĕмĕш те мар пулĕ-ха, çĕр те пĕрремĕш пулĕ-ха. Эс намăсна вуçех çухатнă. Ак курăр кама качча илетĕр эсир. *(Журнал кăтартать.)*
**ТЯТТЮК.** Кам вара унта? *(Журнал пăхса.)* Ай-тур, тур. Ай, намăс... Ай, намăс... Журналах пичетлесе кăларнă-ха тата. Вара капла кайран хамăртан пӳрнепе тĕллесе кулаççĕ вĕт. Ну-ка, кай халех тухса.
**НЮРА.** Эпĕ те хама текех мăшкăллаттармастăп. Пуçăн кĕртместĕр пулсан, кутăн кĕрсе те пулин ку килте хуçа пулатăпах*. (Тяттюксен килне кĕрсе каять.)*
**ТЯТТЮК.** Ак, тамашша. Вара кун пек мĕн пулса тухать-ха?
**МАЮК** *(юрласа).* Туй-туй-туй-туй, туй пулать,
Кӳршĕ ывлĕ авланать.
Амăш тупса панипе,
Майра арăм илнипе.
Майра арăм пултарать –
Хăлха чикки тыттарать.
Çиле хирĕç тăнипех
Ача çуратса парать.
**НЮРА** *(вĕрен илсе тухать).* Мĕн хытса тăратăр? Пӳрте кĕрĕр, туй пуçламалла.. Аннеçĕм...
**ТЯТТЮК**. Кай, паккăç!
**НЮРА**. Аттев...
**ПĂНЧЧУК**. Ов?
**НЮРА.** Шурик, кил çума.
**ШУРИК.** Ак ну-ха. *(Маюксен енне кайма тăрать.)*

НЮРА *(Шурике веренпе çавăрса илсе).* Ăçталла эс? Кам патне? Хăлха чикки çименни санăн чылай пулать-и?
ШУРИК. Яр мана, яр теп!
МАЮК *(юрласа).* Çĕнĕ арăм ăратлă,
Çĕнĕ арăм хăватлă.
Тирке-тирке ман хĕре,
Тупса ячĕç чаплине.
Ах, чаплă, пит чаплă,
Урăм-сурăмах чаплă,
Ташлатса кăна тăрать,
Вĕри çатма çулатать.
НЮРА. Ну, качча илетĕн-и мана?
ШУРИК. Çук.
НЮРА. Апла пулсан хам илетĕп. Кил-ха тӳрех пичет çапар. *(Шурике чуптăвать.)*
ШУРИК. Кун пек юрамасть, ирĕксĕрлеме юрамасть.
НЮРА. Халь çĕнĕ мода. Эсир, каччăсем, вĕтелсе кайнăшăн хĕрсем айăплă мар. Ĕлĕк хĕр вăрланă, халь каччăсене вăрлаççĕ. Ак сана пĕтĕм сценари. Ну, тăванăмăрсем, савнă çыннăмăрсем, урамра каркаланса тăнипе ĕç тухмасть. Атьăр пӳрте кĕрер те кĕрекене ларса туя туса пăрахар.
ПĂНЧЧУК. Мĕн тет?
ТЯТТЮК. Туса пăрахар тет.
ПĂНЧЧУК. Тата кама туса пăрахасшăн вара вăл?
ТЯТТЮК *(тарăхса).* Сана, тăмана!
ПĂНЧЧУК. Мана? Эп... Эп...
ТЯТТЮК. Ах, тăмана-тăмана, иксĕр те вĕт тăмана. Пĕри ăслă пулсассăн çак мăшкăла курмăттăм.
НЮРА. Аннев, сĕтелӳ хатĕр-и?
ПĂНЧЧУК. Мĕн тет?
ТЯТТЮК. Хатĕрӳ пур-и тет.
ПĂНЧЧУК. Ман хатĕрпе мĕн тăвасшăн вара вăл?
ТЯТТЮК. Ĕçесшĕн, çиесшĕн. Курмастăн-и кинӳ ĕне пек. Ĕне пек кăна мар, тĕве пек. Ăна ĕçтерсе-тăрантарса пĕтерме те çук. Пăнччук, çакăнма хатĕрлен.
ПĂНЧЧУК. Ма ман çакăнмалла тет вара? Эпĕ ку килте халлĕхе хуçа-ха. Мана хирĕç тăракансене тапатăп та кăларса яратăп. Атя-ха, хĕрĕм... *(Нюрана илсе кайма тăрать, леш хăйне çавăрса илет те чышса ярать. Пăнччук Маюк енне сирпĕнсе каять.)*
НЮРА. Ак çакăн пек-и? Эсĕ мар, халĕ кунта эпĕ хуçа.
ПĂНЧЧУК. Ах, Маюк, пыр-ха Феняна чĕнсе тух.
МАЮК. Ман хĕре пĕрре тиркерĕр, текех сирĕн енне ура та ярса пустармастăп. Феняпа Шурике пĕрлештерме план турăм тен, нимĕнле план та тума пĕлместĕн эс. Юрату мĕн иккенне туйса курайманăн ху, çапах ыттисене юратма вĕрентесшĕн. Акă сире валли чаплă кин, саркаланса çеç пурăнăр.
ТЯТТЮК. Маюк, турă пул, Фенянах кин тума пар, хуса яр ку майрана.

НЮРА. Маюк аппа, мĕн палкаса тăраççĕ вĕсем унта?
МАЮК. Хăвăрах хуçаланăр теç. Сана савса пăрахнă та мухтаса пĕтерeймеç.
НЮРА. Маюк аппа, вĕсене кĕтсе пулмасть. Атя сĕтел çине хатĕрлеме пулăш-ха.
МАЮК. Çиччас. Вара сых ятне упранă çимĕçсем Тяттюкăн сахал пулакан марччĕ-ха. Тата çу варринче апат шырама нӳхрепе анмалла мар, пахчара та тем те пур. *(Пахчана кĕрсе каять.)*
НЮРА. Васкарах, Маюк аппа, эп унччен пӳртне ухтарса тухам-ха. *(Кĕрсе каять.)*
ШУРИК *(вĕренĕнчен вĕçерĕнсе).* Анне, пĕтертĕн эс мана, Феняна юратмарăн, хырăмлă хĕре вара...
ТЯТТЮК. Кам пĕлнĕ вĕт, кам пĕлнĕ... Эпĕ лайăхрах тăвасшăнччĕ. Эп бизнес тăвасшăнччĕ. Мĕнле те пулин хăваласа кăларса ярасчĕ ăна. Пăнччук, пӳрте кĕрсе çавна мĕн те пулин ту-ха. Эс арçын-и арçын мар-и?
ПĂНЧЧУК. Арçын та-ха...
ТЯТТЮК. Арçын пулсан мĕн тăран? Пыр, кĕр часрах ун патне.
ПĂНЧЧУК. Ма ман кĕмелле? Вара вăл Шурике качча килеп тет вĕт-ха.
ТЯТТЮК. Ах, анра сурăх, сана ыталама мар, хăваласа яма кĕртеççĕ.
ПĂНЧЧУК. Эпĕ... Эпĕ çынна хăваласа кăларма пултараймастăп. Вăл тĕлĕшпе эс маçтăр, эсех кĕр.
ТЯТТЮК. Эх, пиçмен пашалусем, иксĕр те пĕр хĕрарăма тăмастăр вĕт-ха эсир. Ăçта-ха вăл?! *(Пӳртне кĕрсе каять. Лере кăшкăрашма, чанкăлтатма тытăнаççĕ. Юлашкинчен Нюра Тяттюка чышса кăларса ярать.)*
ПĂНЧЧУК. Хăваласа ячĕ.
ТЯТТЮК *(йĕрсе, Шурике).* Вилсе выртасчĕ сан. Ку намăса тӳсиччен эс вилнине çăмăлрах чăтса ирттернĕ пулăттăмччĕ эп.
ШУРИК. Эппин вилетĕп, çакăнатăп. *(Вĕренне илсе кайма тăрать.)*
ТЯТТЮК. Шурик, мĕн шут тытрăн, ачам, пире тăлăха тăратса хăварасшăн-и? Сан çакăнмалла мар, сан пурăнмалла. Эс çакăниччен хам çакăнам.
ПĂНЧЧУК. Тĕрĕс. Пирĕн килте пĕтĕм инкек сана пула пулса пырать, эсех çакăн.
ТЯТТЮК. Ха, пăх-ха мĕн калаçать. Эс эп вилессе кĕтетĕн-и-ха? Мана вĕлерсе Маюка ертсе килесшĕн-и, кĕрт йытти?! Хам çакăниччен эпĕ малтан сана çакатăп. *(Вĕренпе Пăнччука мăйĕнчен çавăрса илет.)*
ПĂНЧЧУК. Тяттюк, турă пул, çав майрашăнах çылăха ан кĕр.
ТЯТТЮК. Сана Маюк валли хăвариччен тамăкра çунам та...
ПĂНЧЧУК. Юрĕ-юрĕ, килĕшетĕп... Анчах виличчен малтан хăвна ыталаса илме пар-ха. *(Тяттюка ыталать.)* Тяттюк, пĕрле виççĕмĕш теçетке пурăнатпăр, картинка пек ывăл çуратрăмăр, кермен пек пӳрт туса кĕтĕмĕр. Сана ку таранччен тарăхтарнă та пуль, хурлантарнă та пуль. Каçар ĕнтĕ мана.
ТЯТТЮК. Ах, Пăнччук... *(Пăнччука ыталать.)*
ПĂНЧЧУК. Ах, Тяттюк...

**ТЯТТЮК**. Пăнччук, мĕншĕн сан вилсе выртмалла тет вара? Атя хăйне çук тăвар.
**ПĂНЧЧУК.** Хăйне? Анчах мĕнле? Эпĕ ку таранччен автан та пусса курман, хăвах пусса пурăнтăн.
**ТЯТТЮК.** Ку автан мар, хĕрарăм çеç. Пăв та пăрах.
**ШУРИК**. Хупаççĕ.
**ТЯТТЮК**. Вăл та пур.
**МАЮК** *(пахчаран çимĕçсем йăтса тухса).* Эсир халĕ те кунта тăратăр-и-ха? Эппин тăрăр-ха. Ах, мансах кайнă, лешĕ пур-и?
**ТЯТТЮК.** Мĕнĕ – лешĕ?
**МАЮК** *(юрласа).* Шăнкăр-шăнкăр-шăнкăр юхакан,
Çулăм сапсассăнах çунакан.
Ăша ярсан пуçа каякан,
Пуçа кайсан ăн пăтратакан.
Шĕвекĕ хаяр пулнипеле
Мана чаракран кăларакан,
Упăшкуна куçу умĕнчех
Çавăрса илме пулăшакан.
**ПĂНЧЧУК**. Пурччĕ, мĕнреччĕ... *(Кайма тăрать.)*
**ТЯТТЮК.** Пăнччук, тăр çумра! Ăçта каян, тăмана? Кампа каян мунчана? Манран кăна мар вĕт, санран та, ывăлран та кулаççĕ.
**ПĂНЧЧУК.** Ан кăшкăр, кунта клухуйсем çук. Санпа пурăниччен ак каятăп-ха куç курми.
**МАЮК**. Вара çав, вара, Тяттюкпа хур курса пурăниччен тахçанах тухса каймалла. Çамрăк чух хам та сахал мар систертĕм-систертĕм те, сисмерĕн. Кайран та куç хыврăм-хыврăм та, пăхмарăн.
**ТЯТТЮК.** Ха, эсĕ ăна хапсăнса пурăнатăн-и-ха, Маюк? Нарспипе Сетнере выляса çӳресе пĕрлешмех шут тытрăр-и?
**МАЮК.** Хапсăнатăп çав, хамсăнатăп. Ак хăвăн умăнтах çавăтатăп та илсе каятăп. *(Пăнччука çавăтса.)* Атя, Пăнччук, кайрăмăр.
**ТЯТТЮК.** Пăнччук! Маюк! Вĕлереп*! (Маюка çавăрса илет те çапăçаççĕ, юлашкинчен халтан кайнипе лаштăрах лараççĕ. Пăнччук вĕсене чарать, кайран тухсах каять.)*
**МАЮК**. Эх, Тяттюк, мĕн хăтланатпăр-ши?
**ТЯТТЮК.** Ан та кала.
**МАЮК.** Шăкăл-шăкăл калаçса Феняпа Шурикĕн ачисене пăхса лармаллаччĕ вĕт пирĕн. Эпир пур...
**ТЯТТЮК.** Ан та кала. Паçăр Шурик Феняна илсе килсен пеххиллесе кĕртмесĕр... Тен сирĕн пата каçса туй тăвар? Ку, пӳртри, лартăрах анраса.

*Пӳртрен Феня тухать, вăл чăматан йăтнă.*

**МАЮК.** Феня, хĕрĕм, ăçталла эс капла?
**ФЕНЯ.** Тĕнчене.
**ТЯТТЮК.** Шурике пăрахса-и?

**ФЕНЯ.** Хăвăр ăна авлантаратăр та, авлантаратăр, мана вара.... *(Йĕрет.)*
**ШУРИК.** Феня, ан кай, эс кайсан эпĕ те пĕр кун та пурăнмастăп. Нюрка суять вăл, эпĕ ăна нимĕн те туман. Эпĕ санах юрататăп.
**ФЕНЯ.** Халь тин маншăн пурпĕрех.

*Пăнччук килет, аллине эрех кĕленчипе черкке тытнă.*

**ТЯТТЮК.** Ма пурпĕр пултăр? Иксĕр пĕрне пĕри юратнине мĕн çиттĕр? Часрах пĕрлешĕр те... Кӳршĕре пурăннипе пĕлетĕп-çке, санран сăпайлă хĕр ялĕпе те çук. Санран чаплă кин те ман тĕле пулас çук.
**МАЮК.** Чим-ха, чим, Тяттюк, эс чăнласах калатăн-и е Нюркран хăтăласчĕ тесе кăна-и?
**ТЯТТЮК.** Чăнласах пулмасăр. Чĕлхе чараксăр пулнипе ĕмĕр тăршшĕпех ӳкĕнетĕп те, шăмăсăр япалана чарса пĕтерейместĕп çав, вĕчĕрхенсе кăна тăрать.
**МАЮК.** Вара халь ман мĕн тумалла тет-ха?
**ТЯТТЮК.** Хĕр памалла.
**ПĂНЧЧУК**. Ним те шутласа ан тăр, Маюк, атя хĕрне пеххилле те... *(Черкке тыттарать.)*
**МАЮК.** Вара сирĕн патăрта мĕн вĕт-ха...
**НЮРА** *(тухать).* Маюк аппа, веçех хатĕр, пурне те пӳрте илсе кĕр. Эсир мĕн, кунтах туй тăвасшăн-и?
**МАЮК**. А-а, аха... *(Вăрттăн.)* Нюрка хĕрĕм, мыскара вĕçленчĕ пулмалла, хăйсемех пирĕн енне пиччĕн çаврăнчĕç.
**НЮРА.** Çук вара, мыскара пуçланать кăна-ха.
**ПĂНЧЧУК.** Çук, мыскара мар, халь пурнăç пуçланать, çĕнĕ пурнăç. *(Шурикпе Феняна.)* Ну, ачасем,  эп ним те калама пĕлмеп те çапла пултăр. Ип пултăр, сип пултăр, çак черкке пек тулли телейлĕ пулăр. Васпачи Вассаппа, тӳшек çинче Тяттюк аппа, матрас çинче Маюк аппа, навус çинче Нюраппа. Кайрĕ. *(Ĕçсе ярать.)*
**НЮРА.** Мĕн? Эсир мĕн, кавар мурăр-и? Эсир мана мăшкăл кăтартасшăн-и?
**ПĂНЧЧУК.** Эпир туй тăватпăр. Тяттюк ывăл авлантарать, Маюк вара хĕр парать.
**НЮРА.** Маюк аппа, эп тем ăнланаймарăм.
**МАЮК.** Вара ăнланмалла марри кунта нимĕн те çук та-ха... *(Нюрана.)* Кил-ха кунта. Капла та майлашĕнчĕ теп-çке, хамăр шухăша вĕçлер пуль теп.
**НЮРА**. Çук вара, халь тин эпĕ задний ход памастăп. Эс хăвăн ĕмĕтне пурнăçланă пулĕ те, эпĕ çук-ха. Шурик, кил-ха хам çумма.
**ШУРИК.** Эп мĕн... урана ыраттартăм-ха, те хуçăлсах ӳкрĕ. Ах, ыратать...
**НЮРА** *(пырса Шурике ярса илет).* Эс тата турткаланса тăратăн-и?
**ФЕНЯ.** Ан тĕкĕн Шурике, сан мар вăл.

**МАЮК.** Нюра хĕрĕм, картаран тухса каяр мар-ха, тем сиктерсе кăларăпăр.
**ФЕНЯ.** Эп Шурике пурпĕр хамран вĕçертместĕп. Шурик, кала пăрăнтăр вăл. Кала эп сан арăму тесе.
**ШУРИК.** Арăм çав, арăм.
**МАЮК.** Вара капла ял çине сан пирки аван мар ят кайма пултарать вĕт-ха. Леш сан хулари илтсен мĕн тейĕ.
**НЮРА.** Эп текех унпа пурăнмастăп.
**ТЯТТЮК.** Эс ху валли урăххине те тупан. Мĕн тупнă эс пирĕн Шурик çумĕнче, вăл вĕт... Вăл мемме кăна, ним тума та пултаракан çын мар.
**НЮРА.** Манпа пулсан эп унран чăн-чăн арçын тăвап.
**ПĂНЧЧУК.** Вăл пирĕн ĕçет, туртать.
**НЮРА.** Эп хам та ĕçетĕп те, туртатăп та.
**ТЯТТЮК.** Ку кăна çитменччĕ. *(Нюрана.)* А вăл пирĕн кăштах катăкрах, шарикĕсем тухса ÿкнĕ.
**НЮРА.** Ман хамăн та пурте вырăнта мар. Справка та пур псих чирĕпе чирлĕ текенни. Çавăнпа та ак çакăнтах сире çапса пăрахсан та мана нимĕн те тумаççĕ.
**ФЕНЯ.** Мĕн ăна ÿкĕтлесе тăмалли. Шурике кама-кама, анчах сана памастăп. Шурик, атя пирĕн пата.
**НЮРА.** Çук вара, Шурик паянтан манăн.

*Шурике иккĕн ик енне сĕтĕрме пуçлаççĕ, ÿкеççĕ, тĕркешеççĕ. Юлашкинчен Шурик аяла юлать, Феня ун çинче. Нюра Феняна сирсе ывăтас тесе çĕклет те пăрахать. Феня Шурике ыталаса илнĕ те, вĕçерĕнмест. Кайран Нюра халтан кайса ларать.*

**ФЕНЯ.** Ах аван пулчĕ те, Шурикпе тинех ыталанса выртрăм иккен.
**НЮРА.** Эп сана парап аван. Пăрăн ун çинчен, Шурик ман упăшка.
**ФЕНЯ.** Çук, манăн.
**НЮРА.** Сан упăшку пулма вăл санпа çÿресе те курман. Манпа вара... Шурик – ман упăшка.
**ФЕНЯ.** Сан упăшку хулари шăппана, Шурик ман упăшка.
**НЮРА.** Çук, манăн. Шурик, кала-ха кам санăн арăму?
**ФЕНЯ.** Шурик, эпĕ вĕт? Кала Феня тесе.
**НЮРА.** Çук эпĕ, Нюра, Нюра сан арăму.
**ФЕНЯ.** Çук, Феня, Феня.
**НЮРА.** Нюра, Нюра.
**ФЕНЯ.** Сывламасть вăл.
**НЮРА.** Мĕнле - сывламасть?
**ФЕНЯ.** Вĕлерчĕ...
**НЮРА.** Шурик, тăр халех. Уç куçна!
**ФЕНЯ.** Вĕлерчĕ, Шурике Нюрка вĕлерчĕ.
**МАЮК.** Чăнах сывламасть.
**ПĂНЧЧУК.** Ыльăм, ыльăм теп.
**ТЯТТЮК.** Юнĕ те тапмасть.
**ФЕНЯ** *(йĕрсе).* Шурик....

НЮРА *(хăраса).* Эп ăна перĕнмен те. Эс вĕлертĕн ăна, ун çине хăпарса выртрăн...
ФЕНЯ. Эп ăна ыталарăм çеç. Эс вара мана ун çинче ак çапла турăн. *(Кăтартса парать.)*
НЮРА. Эс ăна çăварĕнчен чуптуса сывлăшсăр туса вĕлертĕн.
ФЕНЯ. Çук, эс ăна ирĕксĕр качча илнипе... Çук-ха ирĕксĕр ху çине авлантарнипе чĕри чăтайманнипе вилчĕ вăл.
МАЮК. Çынни мĕнле лайăхчĕ...
ТЯТТЮК. Пĕтерчĕç, пĕтерчĕç ывăла!..
ПĂНЧЧУК. Ыльăм, ыльăм теп, ма халех вилсе выртрăн? Мĕнле пурăнмалла халь пирĕн сансăр?
МАЮК. Эх, хывăх пуç. *(Нюрана.)* Ма санпа каварлашрăм-ши? Мăшкăл, мăшкăл тӳсейменнипе вилчĕ ĕнтĕ вăл.
ТЯТТЮК. Сывă пекех выртатăн вĕт.
МАЮК. Сан пек ырă çын çĕр çинче те çукчĕ.
ТЯТТЮК. Ĕçмесчĕ, туртмасчĕ...
ПĂНЧЧУК. Пуçĕ те пурччĕ.
ФЕНЯ. Ăсĕ те пурччĕ.
МАЮК. Ĕçченччĕ.
ТЯТТЮК. Вăйлăччĕ.
ФЕНЯ. Тем тума та пултаратчĕ.
МАЮК. Ăна та тăватчĕ.
ТЯТТЮК. Кăна та тăватчĕ.
ПĂНЧЧУК. Пурне те тăватчĕ.
ТЯТТЮК. Аллу та пăрлана пуçларĕ вĕт.
ПĂНЧЧУК. Тыттармалла ăна.
МАЮК. Феня, хĕрĕм, тыттар, тыттар ăна. *(Феня Шурик аллине илсе пичĕ çумне тытать.)*
ПĂНЧЧУК. Милицие тыттармалла теп. Вĕлерекене милицие тыттармалла.
ФЕНЯ. Милицие тет.
МАЮК. Милици! Милици! Ăçта милици? Çук милици.
НЮРА. Эп мар, ăна Феня вĕлерчĕ. Ăна тыттармалла.
ТЯТТЮК. Эсĕ вĕлертĕн ăна, эсĕ. Сана тыттармалла, сана хуптармалла. Атьăр ăна унччен çыхса пăрахатпăр.

*Нюрана пурте хăвалаççĕ, леш тарать. Çав вăхăтра Шурик апчхи тăвать, Нюрапа Феня çакна сисеççĕ. Феня Шурик апчхи тунине хуплас тесе хăй çине-çине апчхи тăвать.*

НЮРА. Эп хуптарап сире. Эп хам сире пурне те хĕве хупса лартатăп. Кур-ха, вилнĕ çын чĕрĕле пуçларĕ.
ФЕНЯ. Ăна эпĕ апчхи турăм, Шурик мар. Сунас ерчĕ. Апчхи!
НЮРА. Шурик, тăр халех. Тăр, мур илесшĕ! *(Шурике тапать.)*
ФЕНЯ. Вăл вилнĕ, вилнĕ. Ан тап вилнĕ çынна.
НЮРА. Вилнĕ эппин?
ПУРТЕ. Вилнĕ. Вилнĕ.

**ПĂНЧЧУК** *(пиншакне хывса Шурике витет).* Эй, çӳлти турă, Шурик чуруна çӳлти патшалăха лекмелле тусам.

*Пурте харăс йĕрем пекки тăваççĕ.*

**НЮРА**. Вилнĕ эппин? Вилнĕ... Вилнĕ... Юрĕ, халех давленине виçетпĕр.
**ТЯТТЮК.** Пирĕн давлени виçмелли приборсем çук.
**НЮРА.** Манăн çумри приборсем те лайăх ĕçлеççĕ. *(Пĕр аллине пиншак айне чиксе ярать, тепĕр аллипе Шурикĕн аллине илсе хăйĕн кăкăрĕ çине тытать. Шурик кăшкăрса ярса сиксе тăрать.)* Куртăр-и?
**ПĂНЧЧУК.** Вилмен-и эс?
**ТЯТТЮК.** Мĕнле вилмен?
**МАЮК.** Ма вилмен вара?
**ШУРИК.** Чĕрĕлтĕм.
**НЮРА.** Вилнĕ çынна чĕртмелли меслет пĕлес пулать ăна. Ну, Шурик, вилсе чĕрĕлтĕн. Халь туй туса тăкак куриччен пӳрте кĕрсе, вырăн çине шурă простынь сарса упăшкипе арăмĕн ĕçне пуçлар. Е сана вилме килĕшсе кайрĕ-и, чăннипех вилсе выртас килет-и?
**ФЕНЯ.** И-и-и, кун пек пулсан чĕрĕлмелле те марччĕ сан. *(Чăматанне илет те каять.)*
**МАЮК.** Феня! Феня теп, ан кай, хамах майлаштаратăп. Сана та майлаштаратăп, Шурике те майлаштаратăп, пуртне те майлаштаратăп. *(Феня хыççăн тухса чупать.)*
**ПĂНЧЧУК.** Тяттюк, ăçта вĕренӳ? Атя... *(Каяççĕ.)*
**НЮРА**. Шурик, нумайччен йăлăнтарасшăн-и эс? Атя! *(Шурике çавăтса Тяттюксен пӳртне кĕрсе каяççĕ.)*

3 **КАРТИНА.** *Çавăнтах, кăшт вăхăт иртсен. Шурик тухать, ун хыççăн Нюра.*

**НЮРА**. Шурик, ăçталла эс? Тарма шутларăн-и?
**ШУРИК**. Эп... Эп...
**НЮРА.** Эпир халь арăмĕпе упăшки. Эпĕ верандăра вырăн сартăм, шурă простынь. Пирĕн паян чап-чап уйăхĕн пĕрремĕш каçĕ. Пĕрремĕш каçра упăшки арăмне ыталать, ыталать. Унтан татах ыталать. Кайран ак çакăнта *(Хырăмне тытса кăтартать.)* пĕри йăшăлтатма пуçлать.
**ШУРИК** *(хăраса).* А?!
**НЮРА.** Йăшăлтатать-йăшăлтатать те тухса ӳкет. Мана курать те «анне» тесе кăшкăрса ярать.
**ШУРИК.** И-хи-хи-хи...
**НЮРА.** Сана курать те «атте» тесе кăшкăрать.
**ШУРИК**. У-ху-ху-ху...
**НЮРА.** Атя иксĕмĕр кĕретпĕр те...
**ШУРИК.** Çук, эпĕ кĕместĕп. Ман санпа мар... Ман...

**НЮРА.** Феняпа пулас килет-и? Эс кунта уни-куни не гони. Пĕрре вилнĕ пек пулса мана ухмах вырăнне тăратса хăварма пуçларăн, тепре те çавăн пек хăтлансан...
**ШУРИК.** Эп юратмастăп сана.
**НЮРА.** Эп пит юратса тăрап сана, сăлтав пулмасан... Атя! *(Вăйпа илсе кĕрсе каять.)*
**МАЮК** *(килĕнчен тухать).* Тяттюк! Пăнччук! Нюркаран хăраса ăçта тарса пытантăр çак?

*Пăнччукпа Тяттюк тухаççĕ.*

**ПĂНЧЧУК.** Кунта-ха эпир.
**МАЮК.** Мунчара çĕр каçиччен пĕреххутчен хамăр пата каçмаллаччĕ. *(Тяттюка.)* Мĕн пулчĕ-ха тата?
**ТЯТТЮК.** Шăл сурать. Пăнччук, сивĕ шыв ăсса килсе пар-ха.

*Пăнччук каять.*

**МАЮК.** Вара паçăр ним те каламарăн-çке.
**ТЯТТЮК.** Халь ыратма тытăнчĕ. Нервăсем чĕвен тăрсан ялан шăл сурма пуçлать ман.
**МАЮК.** Вара Захар Иванч патне каймаллаччĕ. Ĕçмеллине чиксе кайсан çĕр варринче те илтекенччĕ вăл.
**ПĂНЧЧУК** *(алтăрпа шыв ăсса килет).* Ме сып.
**ТЯТТЮК.** Пĕрре кайнăччĕ ĕнтĕ вăл Захар Иванч патне. Апла та хăтланса пăхрĕ, капла та хăтланса пăхрĕ. Çур сехет аппаланчĕ, пурпĕр, туса çитереймерĕ.
**ПĂНЧЧУК.** Мĕн?! Эс Захар Иванчпа çавăн пек-и-ха?! Ак чашлаттаратăп сивĕ шывпа!
**ТЯТТЮК.** Эп пломбине çур сехет турĕ теп. Киле килсен пĕрре кăна салма çыртрăм, пломби тухса та ӳкрĕ. Ах, шăлăм...
**МАЮК.** Юрĕ, атьăр пирĕн пата. Çиессĕр те килет пуль паян, çывăрассăр та килет пуль.
**ПĂНЧЧУК.** Уй тăмани пек урам варринче ларар мар çав. Атя, Тяттюк.
**ТЯТТЮК.** Çиес шухăш-и-ха манăн кунта. Ах, шăлăм... Эсир кĕрĕр, шăла сивĕ шывпа чӳхем-ха.

*Маюкпа Пăнччук кĕрсе каяççĕ. Машина сасси илтĕнет. Кăшт тăрсан Вова килет, хура куçлăх тăхăннă.*

**ВОВА.** Пулаççĕ вĕт çакăн пек ялсем, халь те асвальт сараймаççĕ. Кинеми!
**ТЯТТЮК.** Кам кинеми кунта?
**ВОВА.** Каçарăр, хыçалтан пăхсан... Тепĕр хут каçару ыйтатăп. Çывăхра трактор çук-и кунта? Тепĕр тесен çĕр варринче кама тупайăн. Çамрăксем те курăнмаççĕ.

**ТЯТТЮК.** Çамрăксенчен мĕн усси вĕсенчен? Хальхи çамрăксем мунчаласем кăна вĕсем. Ват çын хăть тăват çын шутне тăрать.
**ВОВА**. Тăват çын шутне тăрсан, тăват çын чухлĕ тĕк-ха ак машинана, лачакаран тухам.
**ТЯТТЮК**. Пĕр палламан çынна ахаль пулăшма эп мĕн, йӳн чăваш-и?
**ВОВА.** Эпĕ сана укçа паратăп.
**ТЯТТЮК.** Укçа? Чăнах паратăн-и?
**ВОВА.** Мĕн чухлĕ кирлĕ?
**ТЯТТЮК.** Эп пит мăнкăмăллă мар та, пин тенкĕ те памасан, вырăнтан та хускалмастăп.
**ВОВА.** Мĕн чухлĕ? Ме виçĕ пин.
**ТЯТТЮК.** Э, çук-çук...
**ВОВА.** Сахал-и? Ме тата.
**ТЯТТЮК.** Кай-кай-кай, эс мана кунта укçаллă тесе курланкаранах ярса ан ил-ха.
**ВОВА.** Тата хушса паратăп, ме. Лачакаран кăна тухасчĕ. Пуçĕпех кĕрсе лартăм пулмалла лачакана: кунта та, пурнăçРа та. Нимле укçа та пулăшаймĕ.
**ТЯТТЮК.** Кай, тем курса тăрас пур çĕр çинче. Кĕтмен-туман çĕртен кун чухлĕ укçа йăтăнса аннипе чĕрем тапма пăрахрĕ пулмалла. Мĕнле çын пултăн-ха эсĕ, ачам?
**ВОВА.** Президет эп.
**ТЯТТЮК** *(хăраса).* Президент? Калатăп çав таçта курнă пек. Телевизор çинче курнă ахăртнех. Апла пулсан укçусене пуçтарса чик. Президентсене эпир ахалех пулăшатпăр.
**ВОВА.** Эс мана ăнланмарăн, эп урăхла президент. ООО ХА-ХА-ХА-ХУ президенчĕ.
**ТЯТТЮК.** Ун пек президент та пур-и çĕр çинче? Мĕн тăвакан президент вара вăл, култаракан-и?
**ВОВА.** Вăл-и? Вăл... Чим-ха, тăр, ан хускал. Пуçна кăшт пăр. Вăл енне мар, тепĕр енне. Кăкăрна кăлар. *(Тяттюк хушнине туса пырать.)* Халь кĕпӳ аркине çӳлерех çĕкле.
**ТЯТТЮК.** Ай-уй, президент тесе манран кулса ан тăр-ха. Эп кунта арçын шухăшлă хĕрарăм мар пуль. Пăх-ха ăна çамрăк пуçпа ват çынран мĕнле кулса тăрать. Ак яратăп çурăм урлă.
**ВОВА.** Тăхта-ха эс. Эп пачах урăх шухăшпа. Шел-им сана уруна кăтартма?
**ТЯТТЮК**. Ялта эпĕ халиччен ятлă-сумлă çын пулнă. Халь эс тесе пĕтĕм вăрттăнлăха халăх çине кăлармалла-и?
**ВОВА**. Вăт, кукăр ура, ăçтан чĕнсе.
**ТЯТТЮК.** Кам кукăр ура, эпĕ-и? Ман ура пек тӳп-тӳрĕ те тăп-тăпăлкка урасем эсĕ халиччен курман та-ха. Ватă пулсан та ман урасене курсан çамрăкки те хăйне тыса чараймĕ.
**ВОВА.** Кукăр çав, кукăр, курмасăрах паллă.
**ТЯТТЮК** *(кĕпи аркине çĕклесе).* Çак кукăр-и? Çак кукăр-и?
**ВОВА.** Во! Во! Çавă кирлĕ те мана. Атту кăтартмасăр тăран. Атя халех машина çине ларатпăр та...

**ТЯТТЮК**. Ай-уй, мĕн хăтланатăн эс, мăшкăллама шут тытрăна?
**ВОВА.** Мăшăкллама мар, хулана илсе каятăп. Санпа эпир.... Пĕлетĕн-и санпа эпир çавăн пек бизнес çавăрса яратпăр.... Эпĕ сана укçа айне тăватăп.
**ТЯТТЮК**. Укçа айне? Мĕн тумалла пулать вара ман унта?
**ВОВА.** Ман клиентсене тăрантарса пурăнакан.
**ТЯТТЮК.** И–и-и, çынсене тăрантарма кăна пултаратăп-ха эп. Апат пĕçерес тĕлĕшпе эпĕ  темиçе туй валли те пĕçерсе пама пултаратăп. Никам кăмăлсăр юлмĕ.
**ВОВА.** Кăмăлĕсене хăвармалла мар çав, атту вĕсем конкурентсем патне каяççĕ. Кашнин кăмăлне тупмалла пулать. Амбицийĕсем тĕрлĕрен хăйсен, юраса пĕтерме те çук. Кама çамрăкки кирлĕ, кама ватти, кама хытканни, кама самăрри. Атя-ха чаплă тум тăхăнтарам. Пăхар мĕнлерех пулăн эс.
**ТЯТТЮК.** Эс тулькка аллусене ирĕке ан яр. Атту хальхи çамрăксене пĕлсе пĕтер-ха. *(Хăй тĕллĕн.)* Эх, çак ялта çĕрсе пурăниччен... Ма кăшт çамрăк мар-ши? Каччи те вĕт...
**ВОВА.** Эй, мĕн ятлă-ха эсир?
**ТЯТТЮК.** Тяттю... Çук-ха, Татьяна Ивановна тесе чĕнеç мана.
**ВОВА.** Татьяна Ивановна, машинара унта веçех пур. Хăшĕ килĕшет, çавна тăхăнăр.
**ТЯТТЮК.** Эх, мĕн пулать те, мĕн килет. Укçаллă пулмасан та хăть чаплă тумне тăхăнса курам. *(Каять.)*
**ВОВА.** Эх, Нюра, Нюра, ăçта-ши эс? Эпĕ вĕт сан валли чаплă, пуян пурнăç тăвас тесе тăрăшрăм. Ун пек пурнăçа вара тӳрĕ чунпа туса пама май çук халь. Мĕн чухлĕ çĕнĕ хĕр халĕ манăн сайтра, кашни качча каясшăн, чĕнессе çеç кĕтеç. Çук, пĕри те кирлĕ мар мана., Нюра çеç куç умĕнче. Эх, сана тепре курас пулсассăн-и... (*Пӳртрен Шурик кутăн чакса йăпшăнса тухать, вăл хĕрарăм халатне тăхăннă.)* Ак, вăл мар-и çав. Эп илсе панă халатах вĕт ку. Нюра! Нюра! *(Шурике пырса ярса илет, Шурик кăшкăрса ярать.)*  Эй, кам эсĕ?
**ШУРИК.** Арçын, тăмана. Эсĕ кам?
**ВОВА.** Эп те арçын.
**ШУРИК.** Эппин ма мана тапăнан?
**ВОВА.** Эс вара ма хĕрарăм халатне тăхăнса çӳрен? Мĕн, урăх шухăшлă йĕкĕт-и эсĕ халь?
**ШУРИК.** Тăхăнтарса ячĕ.
**ВОВА.** Кам тăхăнтартса ячĕ?
**ШУРИК.** Кам пултăр ĕнтĕ пирĕн ялта арçынсене тапăнаканни. Мĕнле пусса антарать, çапли ходом сехре хăпать.
**ВОВА.** Вара ку халат... Чим-ха, чим... *(Халатне шăшăласа пăхать.)* Шăпах çав духи шăрши. Кам тăхăнтарчĕ сана ку халата? Нюра-и?
**ШУРИК.** Каларăм вĕт камне. Малтан ĕнсерен тăхăнтарчĕ, унтан çĕррине тăхăнтарчĕ, кайран  пĕтĕмпех салтăнтарчĕ, вара...
**ВОВА** *(Шурик аллинчи çĕррине курса).* Эп парнеленĕ çĕрре...
**ШУРИК.** Паратăп, пĕтĕмпех паратăп.
**ВОВА.** Шала та кĕме ирĕк пачĕ-и? Мĕн тарăнăш кĕрсе кайрăн?

**ШУРИК**. Чи шалах, койка хыçнех. Çавӑнпа çеç хӑтӑлса тухрӑм. Эс шӑпах вӑхӑтра килтӗн. Атту вӑл кунта мана эрӗс-мерӗс йӑнкки-янкки те жӑн-жан.
**НЮРА САССИ**. Шурик, ӑçта эс?
**ВОВА**. Ку вӑл-и?
**ШУРИК**. Вӑл, вӑл... Илсе кай ӑна часрах кунтан.
**ВОВА**. Тӑхӑнтарт-ха.
**ШУРИК**. Мӗн? А, халех. *(Çӗррине хывать те Вован пӳрнине тӑхӑнтартать.)*
**ВОВА**. Çӗрре теместӗп эп, хама тӑхӑнтарт!
**ШУРИК**. А-а-а... *(Аякка кайса тӑрать те чупса пырса ӗнсинчен çапать.)*
**ВОВА**. Эс ма мана çапан?
**ШУРИК**. Ху тӑхӑнтарт терӗн те, тӑхӑнтартрӑм... ӗнсӳнтен.
**ВОВА**. Эп сана халат тӑхӑнтарт терӗм, сан пек курӑнма.
**ШУРИК**. А-а-а... *(Халатне хывса Вова çине уртать.)* Эсӗ ӑна тӳрех...
**ВОВА**. Ан вӗрент, хамах пӗлетӗп. *(Кӗрсе каять.)*
**НЮРА САССИ**. Шурик, тух унтан часрах.
**ШУРИК**. Шурик тет... Шурик тет... Унта Шурик та мар-ха, унта мерседес. Эх, Феня ӑçта-ши? *(Маюксем патне кӗрсе каять те кӑшт тӑрсан пурте тӗпӗртетсе тухаççӗ.)*
**МАЮК**. Кам килчӗ тен?
**ШУРИК**. Хӑрахкассинчи, мерседесли... Халь вӑл Нюрапа верандӑра... Эх, Феня, халь пире никам та чараймасть. Атя эпир те халех кӗретпӗр те...
**ПӐНЧЧУК**. Сан малтан тӑхӑнасчӗ.
**ШУРИК**. Тӑхӑнса тӑрас килет-и манӑн халь, атте.  Манӑн халь Феняпа... Атя, атте, анне, часрах пеххиллӗр те пире... Фенечка... *(Феняна ыталать.)*
**ПӐНЧЧУК**. Аннӳ çук-ха кунта. Захар Иванч патне кайрӗ-ши ӗнтӗ? (*Чапла тумланнӑ Тяттюк килет.)* Васпачи, ку тата кам?
**ШУРИК**. Вара ку мерседесӑн темиçе арӑм та пур-и?
**ТЯТТЮК**. Мӗн, арӑмна та паллайми пултӑна?
**ШУРИК**. Анне?
**МАЮК**. Хӗвел тепӗр енчен тухнӑ пулас паян.
**ПӐНЧЧУК**. Мӗн ланчашкисем уртса янӑ эсӗ ху çине?
**ТЯТТЮК**. Каятӑп, Пӑнччук, сана пӑрахсах каятӑп. Çитет ыйткалакан пек пурӑнса, виличчен этем ретлӗ пурӑнса курам. Хӑть те мӗн тӑвӑр, хӑть кампа пурӑнӑр, эпӗ вара чӗннӗ чухне каятӑп.
**ПӐНЧЧУК**. Кам чӗнчӗ? Ӑçта каян?
**ТЯТТЮК** *(Шурике).* Эс ма кунта вара? Эс ма çара?
**ШУРИК**. Çара пулсассӑн та телейлӗ.
**ТЯТТЮК**. Нюрка вара ӑçта, пӑрахса кайрӗ-и*? (Пӳртне кӗрет те тӳрех çари çухӑрса тухать.)*
**НЮРА** *(тухса).* Эп сире кунта кансӗрлесе çӳреттереп! Марш кунтан! *(Шурике асӑрхаса.)* Шурик? Эс ма унта? Лере  вара кам?
**ВОВА** *(тухса).* Сан упӑшку.

**НЮРА** *(хăраса).* Вова? Çук, çук! Мана тек виртуаллă упăшка кирлĕ мар. Шурик, хăтар мана унран.
**ШУРИК.** Э, çук-çук, манăн халь Феня пур. Феня, атя-ха хăвăртрах... *(Феняпа килне кĕрсе каяççĕ.)*
**ВОВА**. Ан тар, чĕкеçĕм, эпĕ виртуалли пулмастăп, чăн-чăнни пулатăп.
**НЮРА.** Пĕтĕмпех паратăп. Ылтăнусене те, тумусене те, укçусене те, тульккӑ кай кунтан, хăвар мана.
**ВОВА.** Кирлĕ мар мана нимĕн те, мана эсĕ кирлĕ. Эпĕ сана капла та хăçантанпа шыратăп. Сансăр хĕвел те ăшă мар, уйăх та çутă мар, сансăр укçа та илĕртмест, çăтмах пурнăç та тамăк çеç, интернет та илĕртми пулчĕ.
**НЮРА.** Эппин пăрахатăн эсĕ хăвăн сайтусене?
**ВОВА.** Намăс сайчĕсене пăрахатăп. Мĕн тума кирлĕ пулаç вĕсем мана эсĕ юнашар пулнă чух.
**НЮРА.** Ун пек ĕçре эс пурпĕр урăххисене тупса яран, теприсем патне каян. *(Хырăмне тытса.)* Вара эпир ачапа иксĕмĕр те тăлăх юлатпăр.
**ВОВА.** Ачапа? Эсĕ ача кĕтетĕн-и? Манран-и? Апла пулсан эс хăвна паянтан патша майри теме те пултаран. Чĕкеçĕм, кайрăмăр киле.
**ТЯТТЮК**. Чим-ха, чим, президент, мана ăçта илсе каясшăн пулнă вара эс? Мĕнле ООО вара вăл сан?
**НЮРА.** Вăл темиçе сайт тытса тăрать. Унта арçыннисемпе хĕрарăмĕсем пĕрне-пĕри виртуаллă юратаççĕ, пĕр-пĕрне курмасăр, юнашар тăмасăр  сăмахпа çеç.ООО Ха-Ха-Ха-Ху. Хамăр харпăрлăхпа хамăр хуçа тенине пĕлтерет вăл.
**ТЯТТЮК.** Ах, паккăç, эс мана унта апла çын мăшкăлĕ пулма илсе каясшăнччĕ-и? *(Вована хĕнеме тытăнать.)*
**ВОВА** *(чарса).* Çук, Нюра тухса кайнă хыççăн эпĕ хам ун пек сайтсемпе аппаланмастăп. Халĕ клиентсене патшасем тăватăп, патша майрисем. Хăшĕ кам пулас килет, çавна тăватăп. Намăс киносем вара ӳкерместĕп. Сăмах паратăп, тупа тăватăп. Малашне илемлĕ киносем çеç ӳкерме пуçлатăп. Пăнччук тете, унта сан питӳ те кирлĕ пулать мана. *(Фотопаапарат кăларса.)* Атя-ха сана ӳкерсе пуçна касса илем. Кашни енчен ӳкермелле, виç шайлă пукане тума. Кайран эпĕ сана  киноартист тăвап, чăн-чăн артистран пĕрре те кая мар выляттарап экран çинче. *(Шурикпе Феня капăр тумланса тухаççĕ.)* Эсир вара  вылясшăн-и ман кинора?
**ШУРИК.** Çук, эпĕ виртуаллă  япалапа аппаланмастăп, эпĕ чăн-чăн кинора та выляма пултаратăп халь, диплом ман кĕсъерех.
**ФЕНЯ.** Ман вара артист мар, артист арăмĕ пулас килет, кил хуçи хĕрарăмĕ пулас килет, ачасем те çуратас килет.
**ВОВА.** Нюра, санăн вара манăн килте хуçа арăмĕ пулас килет-и?
**НЮРА**. Çук.
**ВОВА**. Ăнлан-ха ĕнтĕ, юрататăп вĕт-ха эп сана. Сана хам енне çавăрас тесе мĕн кăна тумарăм. Тата мĕн тумалла ĕнтĕ ман? Юлашки хут ыйтатăп: пыратăн-и çук-и?

**МАЮК.** Пырать, пырать. Кунта эпĕ хĕтĕртнипе кăна вăл. Ак Тяттюк ман хĕре тиркенипе ăна ăс кĕртсе илес тесе мыскаранланма тытăнтăмăр та трагеди патнех çитеттĕмĕр.
**ТЯТТЮК.** Вара эсир чăнласах хăтланман-и? Эп кунта хыпса-тухса чутах инфаркт илеттĕм вĕт.
**НЮРА.** Çавă кирлĕ те сире. Çынна тиркиччен малтан хăвăр çине çаврăнса пăхăр, унсăрăн... Арçынсене вара авланиччен кашнинех алла илекен арăмпа пурăнтарса кăтармалла, кайран çумĕнчине нихăçан та кӳрентермĕ. Ну, улшăнтăнах пулсан, илсе кай вара хуçа арăмĕ пулма.
**ТЯТТЮК.** Хăрушă тĕлĕк хыççăн вăранса кайнăнах туйăнать капла.
**МАЮК** *(Вована).* Вăт, картлă çамка, халиччен ăçта çӳренĕ вара эс? Ма маларах килмерĕн?
**ПĂНЧЧУК.** Тяттюк, сĕтеле пĕр хатĕрленĕ япала туйа та туса пăрахар мар-и?
**ТЯТТЮК**. Туса пăрахар çав, Пăнччук, туса пăрахар. Туйне те, çĕнĕ хăтине те. *(Нюрана.)* Ача пăтти çиме те пырăпăр-ха сирĕн пата. Эх, ăçта кайман пĕр качака укçи. Президент, эп сан машину ăшĕнче тутлă йышши эрехсем нумай куртăм. Сут атя.
**ВОВА**. Сутмастăп, ахалех паратăп Нюра тупăннипе савăнса. Атя, эппин, малтан сирĕн туйа тăвар, кайран пирĕнне.
**НЮРА.** Парне вара?
**ВОВА.** Парне? Парне ав лачакара ларать, туртса кăлармалли кăна юлнă.
**ТЯТТЮК.** Ну, савнă кинĕм, ывăлăм, ĕмĕр-ĕмĕр савăнса, ытлă-çитлĕ пурăнма, ача-пăчаллă пулма пиртен пеххил сире.
**ПĂНЧЧУК.** Пур пулăр та ĕмĕр пĕрле пурăнăр.
**МАЮК.** Пирĕн вара сиртен пархатар курмалла пултăр.

*Пурте юрлаççĕ, савăнаççĕ.*

*Вĕçĕ.*